24-мĕш çул тухать. Хакĕ 10 пус.

1941
ИЮНЬ
28
ШАМАТКУН
150 (5865) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Тăшмана çапса аркатмалли çĕнтерӳ геройла ĕçре туптанса çирĕпленет

Совет халăхĕ çирĕм çул хушши мирлĕ ĕçлесе пурăннă тапхăр вĕçленчĕ. Тĕттĕм каç фашистла варвар халиччен никам курман ултавлă ĕç туса, пирĕн çурт çине тапăнчĕ, пирĕн тăван çĕршыв çине юнланнă хĕç çĕклерĕ. Совет правительстви тата унăн пуçлăхĕ аслă Сталин хушнипе Молотов юлташ тунă заявлени пурне те чĕнекен набат пек кĕрлесе саланчĕ. Пирĕн халăх—пĕтĕм енчен хĕçпăаллаллăнă исполин каллех тăван çĕршывăн, чыслăхăн, ирĕклĕхĕн отечественнăй таса вăрçа тухрĕ!

Вăрçă пуçланчĕ. Камăн кăкринче патриотăн тӳрĕ кăмăллă чĕри тапать, çавсем кашниех çак историллĕ саманта-ра хăйсен амăшне—тăван çĕршывне çапла калама васкаççĕ: эпĕ хатĕр, эпĕ хамăн вырăнта! Совет çĕршывĕ хăйсен тăван çĕршывне, хăйсен çĕрне тискер кайăкланса кайнă фашистла тăшманран хăйсен кăкăрĕпе хӳтлекен хăюллă та паттăр боецсен пĕрлĕхлĕ лагерĕ пулса тăчĕ. Кашни заводпа колхоз, кашни хула тата кашни ял — тăшманăн хăрушă крепость, кашни совет çынни—боец. Боец фронтра. Боец тылра.

Аслă Сталин пире яланах мобилизациллĕ хатĕр тăма вĕрентрĕ. Халăхăн геройла ĕçĕпе хăватлă индустри—Хĕрлĕ Çара хĕрлĕ çăлтăрлă кайăксен эскадрильисемпе, танксен лавинисемпе, пурне те аркатса тăкакан артиллерипе хĕçпăаллантарнă хăватлă индустрине туса çирĕплетнĕ. Металл шăратса кăларасси, топливо кăларасси, машинăсем туса кăларасси кашни уйăхрах ӳсе пырать. Халĕ ĕнтĕ, тăшман ултавлăн та ирсĕррĕн килсе тапăнсан, пĕтĕм çĕршыв тăрăх, пĕр вĕçĕнчен тепĕр вĕçне çити янравлă чĕнев кĕрлесе сарăлчĕ.

— Тăшмана хирĕç! Йăлтах—фронт валли! Танксем, самолетсем, тупăсем, карапсем туса кăларма—нумайрах металл, çĕркăмăрăк, нефть, машинăсем! Фронтпа тыл нушисем валли—нумайрах тырă, какай, тумтир, урана тăхăнмаллисем!

Нумай пиншер рабочисемпе служащисем хăйсем çар нушисене тивĕçтерме мĕн чухлĕ кирлĕ—çавăн чухлĕ ĕçлеме хатĕр тăни çинчен каласа пĕлтерчĕç. СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ вăрçă вăхăтĕнче рабочисемпе служащисен ĕç вăхăчĕн çĕнĕ режимне туса çирĕплетрĕ. Кунне пĕр сехетрен пуçласа виçĕ сехет таран обязательнăй йĕркепе сверхурочно ĕçлеттермелле тума ирĕк пани. Черетлĕ тата хушса паракан отпусксене пăрахăçа кăларнă. Вăрçă вăхăтĕнчи çак мерăсем государствăпа халăхăн интересĕсемпе, рабочисемпе служащисен кăмăлĕсемпе пĕтĕмĕшпех килĕшсе тăраççĕ, вĕсене йăлтах ырласа кĕтсе илĕç. Производство командирĕсен задачи — ĕçе халĕ пулса тăнă обстановка ыйтнă пек хăвăрт çĕнетсе йĕркелесси, производствăра кадрсене тĕрĕс вырнаçтарса тухасси тата вĕсемпе тĕрĕс усă курасси пулса тăрать.

Совет çыннисем çакна лайăх пĕлеççĕ: тăшман ултавлă, чее тата вăйлă, пирĕн умра хаяр та йывăр кĕрешӳ тăрать, вăл жертвăсем ыйтать тата малашне те ыйтĕ. Пирĕн çĕлĕксемпе персех çĕнтеретпĕр текен шухăш-кăмăлсем валли вырăн пулмалла мар. Çĕнтерĕве кĕрешсе илес тесен, фронтра тата тылра тимĕр пек çирĕп хастарлăхпа çине тăрса кĕрешни кирлĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ совет çыннисем вăрçăри пек пĕтĕм вăя пухса тăрăшаççĕ. Тăван Сталин, большевикла парти тата Совет правительстви чĕнсе калани çине ответлесе, пирĕн çĕршыври халăх—рабочисем, хресченсем тата интеллигенци, арçынсемпе хĕрарăмсем хăйсен дисциплинине, организованноçне тата пĕтĕм вăя хурса ĕçлес хастарлăхне чăн-чăн совет патриочĕсене кирлĕ пек ӳстерсе пыраççĕ, тăшмана çĕнтерес тесе, халăх хуçалăхĕн мĕнпур участокĕсенче пĕтĕм вăйпа тăрăшса ĕçлеççĕ.

Аслă совет çĕршывĕн гражданĕсем çапăçăва тухас кăмăлпа çунаççĕ. Мобилизаци халиччен историре никам курман хăватлă çĕкленӳпе иртсе пырать. Кам заводра, колхозра, учрежденире тесе шутлать, хăйне мобилизацине тесе шутлать, хăйне валли икĕ çынна, виçĕ çынна кирлĕ чухлĕ ĕç пама ыйтать. Фронта кайнисем вырăнне часах çĕнĕ çынсем тăраççĕ. Вăрçă производствăна чарса лартма пултарайасть тата чарса лартма та тивĕçлĕ мар. Йăлтах урăхла,—вăл производствăна май пур таранах малалла сарса пыма хушать. Планлă заданисене—ирттерсе тултармалла. Çĕнĕ машинăсене тата вооружени средствисене—чи кĕске срокра туса кăларма вĕренсе çитмелле. Тырпула яланхинчен хăвăртрах пухса кĕртмелле. Ĕç вăйĕсен мĕнпур резервисене — ĕçе ямалла.

Ĕçсыннисен хăйсен вырăнĕсенче калама çук пысăк хастарлăхпа ĕçлеççĕ. Хальхи вăхăтра кашни совет çыннинче унăн мĕнпур чи лайăх пахалăхĕсем вăранса çĕхленеççĕ. Ана фронта илмен пулсан, вăл хăйĕн тăван çĕршывне вĕçĕ-хĕррисĕр парăннине ĕçре кăтартса пама тăрăшать тата ăна вăл тума та тивĕçлĕ.

Мускаври «Красный пролетарий» заводра токарь Фролов икĕ станокпа ĕçленĕ. Унпа юнашар халĕ çара илнĕ Котов икĕ станокпа ĕçленĕ. Анчах та унăн станокĕсем ĕçсĕр лармалла мар! Вара стахановец Фролов тăватă станокпа ĕçлеме пуçланă, сменăри нормăна 500—570 процент тултарса пырать. Мастер Ефремов тата строгальщик Жирков фронта тухса кайнă,—станоксем умне вĕсен арăмĕсем тăнă. Донбасри шахтăсенче фронта каякан арçынсем вырăнне вĕсен арăмĕсемпе хĕрĕсем тăрса ĕçлеççĕ.

Июнĕн 25-мĕшĕнче «Правда» хаçатра Мускаври тормоз заводĕнчи работницăсем геройла Хĕрлĕ Çар речĕсене кайнă упăшкисем, тăванĕсем, ашшĕсем, ывăлĕсем патне çырнă çыру пичетленсе тухрĕ. Хĕрарăмсем çапла çыраççĕ:

— Тăванăмăрсем, юратнă чунăмăрсем! Хамăрăн правительство чĕннипе эпир тăван çĕршыва ултавлă, хаяр тăшманран хӳтлеме каятăр. Харпăрхăйĕн çемьисене хăварма çăмăл мар, анчах эпир эпир маттур та хаваслă, хăюллă та паттăр пулнине курса тăратпăр, сирĕнпе эпир мухтанатпăр... Эпир фронта каятăр, эпир тылра юлатпăр. Анчах та пирĕн уйрăм фронтпа уйрăм тыл çук. Производствăра сирĕн вырăна тăрса ĕçлес тесе, сире мĕн кирлине йăлтах çителĕклĕ парса тăрас тесе, эпир мĕнпур вăй-хала, мĕнпур энергине хурса тăрăшăпăр.

Тормоз заводĕнчи работницăсем — Шматова, Алешина, Фролова юлташсем, хăйсен упăшкисене фронта ăсатса янă хыççăн, икшер норма тултарса пыраççĕ: хăйсемшĕн тата упăшкисемшĕн. Ворошилов облаçĕнчи Урожайненски МТС комбайнерĕ Русанов çара кайнă, вара унăн вырăнне халиччен штурвальнăй пулса ĕçленĕ арăмĕ йышăннă. Николаев облаçĕнчи Каховка районĕнчи Фрунзе ячĕпе тăракан колхозра çара илнĕ комбайнер Жихарев, комбайнерсен помощникĕсем Черкашпа Чечен вырăнĕсене Лиханцева, Руманько тата Черкашина колхозницăсем йышăннă. Çĕршер пин совет патриоткисем—фашистла вăрă-хурахсене хирĕçле никам сӳнтерейми курайманлăхпа çулăмланса çĕкленнĕ совет хĕрарăмĕсем, совет воинĕсем ултавлă та ирсĕр тăшмана хăвăртрах çĕнтермелле пултăр тесе, предприятисемпе колхозсенче, хуласемпе ялсенче пĕтĕм чĕререн тăрăшса, пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ.

1919 çулта Мускаври железнодорожниксем тăшмана çĕнтерес ятпа коммунистла субботнике тухнă. Çакă вăл пирĕн çĕршыв калама çук халран кайса çитнĕ вăхăт, хуçалăх арканса кайнă вăхăт пулнă. Хальхи вăхăтра пирĕн тăван çĕршыв нихăçанхинчен те вăйлăрах тата хăватлăрах, хăрушлăх самантĕнче пирĕн рабочи класс, пирĕн колхозлă хресченсем, пирĕн совет интеллигенцийĕ тăшмана пĕтĕмĕшпех çĕмĕрсе тăкма кирлĕ ĕçри хастарлăхпа паттăрлăха, ĕçри героизма кăтартаççĕ, татах та тепĕр хут кăтартĕç. Ленин—Сталин партийĕ воспитани парса ӳстернĕ, хăйсен тăван çĕршывне вĕçĕ-хĕррисĕр парăннă миллионшар совет çыннисем фронта тата тылра хăюллăхпа паттăрлăхăн тĕлĕнмелле чаплă образецĕсене кăтартма тăрăшаççĕ.

Ленин çапла каланă: «Камăн резервсем нумайрах, вăй парса тăракан çăлкуçсем нумайрах, камăн халăх хушшинче чăтăмлăх пысăкрах, вăрçăра çавă çĕнтерет». Пирĕн çĕршывăн иксĕлми резервсем пур, унăн вăй-хал источникĕсем вĕçĕ-хĕррисĕр нумай, нихăçан пулман моралльпо-политикаллă пĕрлĕхпе хурçă пек çирĕплесе тăракан халăхăн чăтăмлăхĕ—вĕçĕ-хĕррисĕр. Хăйсен тăван партийĕ, хăйсен тăван правительстви, хăйсен юратнă çулпуçĕ Сталин таврă тимĕр стена пек çирĕппĕн пĕтĕçсе тăракан совет çыннисем аслăран та аслă, никам çĕмĕрейми вăй пулса тăраççĕ. Нумай пинлĕ митингсенче рабочисем, колхозниксем, интеллигенци Хĕрлĕ Çăран, Тинĕс-Çар Флочĕпе Сывлăш флочĕн хăватне вунă хут нумайрах вăй хурса çирĕплетсе пыма чаплăн тупа турĕç. Таса совет çĕрĕшĕн эпир кĕрешӳре шиклĕх мĕн иккенне пĕлмесĕр çапăсма тивĕçлĕ. Тăван çĕршыва хӳтлеме каякан хăюллă та паттăр патриотсене фронта ăсатса ярса, рабочисемпе хресченсем производствăллă плансене ирттерсе тултарассишĕн вĕçĕ-хĕррисĕр пысăк вăй хурса кĕрешеççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем çакна лайăх пĕлеççĕ: металăн, çĕркăмăрăкĕн, нефтĕн, тырăн кашни тонни вăл—тăшмана хăватлăн çапни, фашистсен лагерьне пăрахнă снаряд пулса тăрать.

Заводсенче тата уйхирсенче ĕçри социализмлă ăмăрту нихăçан пулман хăватлă вăйпа сарăлса пырать. Çĕршер те пиншер предприятисем çурçул планне срокчен тултарса пыраççĕ. Нумаях та пулмасть-ха кая юлса пынă нумай предприятисем халĕ ĕнтĕ малтисен ретне тухса пыраççĕ: çак предприятисенче çĕнĕ те çĕнĕ вăйсем тапранса çĕкленчĕç, çакă вăл продукци туса кăларасси ӳсниччен палăрчĕ. Пиншер колхозсем сахалрах йышлă çынсемпе ĕçлесе тырпула организованно тата пĕр тăкаксăр пухса кĕртме хатĕр тăраççĕ. Çак халиччен пулман хăватлă çĕклену атмосфери çынсен вăйĕсене вунтшар хут ӳстерет, кая юлнисене хăйĕнпе пĕрле малалла хавхалантарса пырать, ĕçри çынсен аслă çарĕн никам çĕмĕрейми хурçă пек çирĕп колоннисене пĕрлештерсе пĕтĕçтерет.

Хăйĕн тарăхăвĕпе çĕкленсе тăнă совет халăхĕ хаяр та хăватлă. Рабочисемпе хресченсем çапла каланăç: эпир фашистла налетчиксене паракан ответ—вилĕм тăшмана! Пирĕн лозунг—çĕнтерӳ! Çĕнтерӳ хĕçĕсем домна кăмакисем умĕнче тата çĕркăмăрăк шахтисенче, нефть промыслисенче тата станоксем умĕнче, колхозсен уйхирĕнче тата çĕнĕ стройкăсенче туптанса çивĕчлеççĕ. Миллионшар çынсен пуçĕсемпе чĕрисенче — тăван çĕршыва пĕтĕм чĕререн юратни, Сталинăн аслă ячĕ, Тăван çĕршыва юратни совет халăхне вăрçăра хăюллă, ĕçре паттăр пулма хавхалантарса çĕклет.

Юлташсем — рабочисем, хресченсем, совет интеллигенчĕсем—фронтри тата тылри боецсем—малалла, тăшман çинелле! Çĕнтерӳ пирĕнте пулать!

(«ПРАВДА» умстатьи, июнĕн 27-мĕш.).

ТАСС опровержений

Гитлер декларацийĕнчи провокаторла-суя заявленисене, кая юлса тунă çав заявленисене, СССР Босфора тата Дарданелсене илмĕшĕн тесе тата СССР Болгарне оккупацилеме шутлать тесе суйса каланисене,—çав провокаторла-суя заявленисене Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ Молотов юнташ хăй июнĕн 22-мĕшĕнче тухса каланинчех сирсе пăрахнă групписене те кулленех пĕр сехетрен пуçласа 3 сехет таран обязательнăй йĕркепе сверхурочнăй ĕçлеттермелле тума ирĕк парас.

2. 16 çула çитмен çынсене обязательнăй сверхурочнăй ĕçе куллен 2 сехетрен ытла мар хутшăнтарма юрать.

3. Иывăрçын хĕрарăмсене, йывăрçын пулни уллăмĕш уйăх çине кайсене, çавăн пекех кăкăр ĕмĕртекен хĕрарăмсене те—кăкăр ĕмĕртекен 6 уйăх хушшинче — обязательнăй сверхурочнăй ĕçе хутшăнтармалла мар.

4. Обязательнăй сверхурочнăй ĕçшĕн рабочисемпе служащисене пĕр çурă хут чухлĕ тӳлемелле.

5. Государство, коопераци тата обществăллă предприятисемпе учреждăнисенче пуринче те черетлĕ отпусксене тата хушса паракан отпусксене пăрахăçа кăларас, отпускпа усă курманнишĕн укçан тӳлемелле тăвас. Чи рабочисемпе служащисене уйрăм цехсене, участоксене тата рабочисемпе служащисен уйрăм групписене те кулленех пĕр сехетрен пуçласа 3 сехет таран обязательнăй йĕркепе сверхурочнăй ĕçлеттермелле тума ирĕк парас.

Румыни правительстви Бухарестран тухса тарни çинчен Рейтер агентстви пĕлтерни

ЛОНДОН, июнĕн 27-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çакăн пек телеграмма-молни парать: Америкăри «Нейшил Бродкэстинг» текен радиовещани компанийĕн корреспонденчĕ паян ирхине Анкарари радиостанци урлă çапла пĕлтернĕ: Совет авиацийĕ тапăннă пирки Румыни правительстви Бухарестран тухса кайнă.

ЛОНДОН, июнĕн 27-мĕш. (ТАСС). «Таймс» хаçатăн Стамбулри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Бухарестран пĕлтернĕ тăрăх, Совет авиацийĕ тапăннинчен çăлăнса Румыни правительстви тата дипломатиллĕ корпус хуларан тухса, паллă мар еннелле тарнă.

НЬЮ-ИОРК, июнĕн 27-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин Стамбулри корреспонденчĕ, Румынирен килнĕ çынсем калани тăрăх, Румыни правительствин учрежденийĕсем Бухарестран тухса кайма хатĕрленеççĕ, тесе пĕлтерет.

Ассошиэйтед пресс агентстви Америкăри радиовещани компанийĕн Анкарари корреспонденчĕн пĕлтерӳне пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă: Совет авиацийĕ Бухарест çине тапăннă май Румыни правительстви Бухарестран тухса тарнă.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Рабочисемпе служащисен ĕç вăхăчĕн вăрçă вăхăтĕнчи режимĕ çинчен

Вăрçă вăхăтĕнче кирлĕ производствăллă заданисене пурнăçа кĕртме тăвас шутпа, СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ **çапла йышăнать:**

1. Промышленность, транспорт, ялхуçалăх тата суту-илӳ предприятийĕ директорĕсене, СССР Совнаркомĕ ирĕк пани тăрăх, предприятири мĕнпур рабочисемпе служащисене те, çавăн пекех уйрăм цехсене, участоксене те рабочисемпе служащисен уйрăм групписене те кулленех пĕр сехетрен пуçласа 3 сехет таран обязательнăй йĕркепе сверхурочнăй ĕçлеттермелле тума ирĕк парас.

2. 16 çула çитмен çынсене обязательнăй сверхурочнăй ĕçе куллен 2 сехетрен ытла мар хутшăнтарма юрать.

3. Иывăрçын хĕрарăмсене, йывăрçын пулни уллăмĕш уйăх çине кайсене, çавăн пекех кăкăр ĕмĕртекен хĕрарăмсене те—кăкăр ĕмĕртекен 6 уйăх хушшинче — обязательнăй сверхурочнăй ĕçе хутшăнтармалла мар.

4. Обязательнăй сверхурочнăй ĕçшĕн рабочисемпе служащисене пĕр çурă хут чухлĕ тӳлемелле.

5. Государство, коопераци тата обществăллă предприятисемпе учреждăнисенче пуринче те черетлĕ отпусксене тата хушса паракан отпусксене пăрахăçа кăларас, отпускпа усă курманнишĕн укçан тӳлемелле тăвас. Чи рабочисемпе служащисене уйрăм цехсене, участоксене тата рабочисемпе служащисен уйрăм групписене те кулленех пĕр сехетрен пуçласа 3 сехет таран обязательнăй йĕркепе сверхурочнăй ĕçлеттермелле тума ирĕк парас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 ç. июнĕн 26-мĕш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Пурне те тивĕç çар обязанноçĕ çинчен кăларнă закон çу 30-в статья хушасси çинчен

Пурне те тивĕç çар обязанноçĕ çинчен кăларнă закона çакăн пек со жанилле 30-в статья хушса кĕртес:

«Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флотне çынсене тăрăх тата черетлĕ при сем тăрăх илнĕ тата фронта кайнă рядовой составрипе начальству кĕçĕн составри çынсене панă çар обмундированийĕ вĕсен харпăрлăхне ку вăрçă хыççăн ăна тавăрса памалла мар».

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 ç. июнĕн 26-мĕш.

Совет информаци бюроĕнчен

Июнĕн 26-мĕшĕнче Минск енче пирĕн войскăсем противникăн пирĕн еннелле кĕрсе кайнă танковăй частĕсене хирĕç çапăçаççĕ.

Унта çапăçусем пыраççĕ.

Пĕтĕм иртнĕ кун хушшинче **Луцк** енче танксен пысăк тата хаяр çапăçăвĕсем пыраççĕ, пирĕн войскăсем вăйлăрах пулни ӳçăнах курăнса тăратъ.

Черновицы енче пирĕн войскăсем Прут юханшывĕ урлă каçма хăтланакан противника ăнăçлăн сире-сире яраççĕ.

Фронтăн **Бессарабири участокĕнче** пирĕн войскăсем государство чиккине хăйсен аллинче çирĕппĕн тытса тăраççĕ, немĕçсемпе румынсен войскисен атакисене сирĕсире яраççĕ.

Скулени патĕнче наступлени тума хăтланнă противнике **Прут** юханшывĕн хĕвеланăç сыранĕ çине хăваласа янă, ăна пысăк сухатусем кӳнĕ.

Иртнĕ кун хушшинче пирĕн авиаци **Бухарест, Плоешти** тата **Констанца** çине бомбăсем пырса пăрахнă. Плоешти районĕнчи нефтеперегонăй заводсем çунаççĕ.

Совет Союзĕпе **Финлянди чиккинче** июнĕн 26-мĕшĕнче çĕр çинчи войскăсен боевой тытăçăвĕсем пулман.

Балти тинĕсĕнче пирĕн авиаци тата тинĕс çинчи çăмăл вăйсем противникăн икĕ подводнăй лодкине путарнă.

Июнĕн 26-мĕшĕнче противник авиацийĕ уйрăмах активлă пулман. Противникăн истребителĕсем пирĕн бомбардировщиксене хирĕç вăйăр кĕрешеççĕ.

Противникăн пĕтерсе тăкнă самолечĕсен хисепĕпе пирĕн çухатусем çинчен калакан даннăйссене тĕплĕн палăртаççĕ.

* * *

Тытăкăна илнĕ румынсем çапла каласа параççĕ: Румынин кашни полкĕнче Германи салтакĕсемпе офицерĕсем 40-шер çын шутланаççĕ, мĕншĕн тесен Германи командованийĕ Румыни салтакĕсене шанмасть.

Румыни войскисен тылĕнче, правило пекех, Германи артиллерийĕ вырнаçса тăрать.

Нимĕçсем румынсене нрĕксĕрлесе çапăстараççĕ, мĕншĕн тесен румын салтакĕсем вăрçа тата нимĕçсене хирĕçле шухăш-кăмăлсем тытса пурăнаççĕ.

* * *

Пирĕн самолетсем сывлăшран бомбăсем пырса пăрахнипе Яссы хулинчи (Румыния) çар объекчĕсене питех те вăйлăн çĕмĕрсе тăкнă.

* * *

Артиллери подразделенийĕн командирĕ, финн белогвардейщинине хирĕç пынă çапăçусен участникĕ Манзий юлташ Н. патĕнче Прут юханшывĕ урлă каçма хăтланнă противнике каялла хăваласа ярас ĕçре пирĕн пехотăна пысăк ăсталăхпа пулăшнă. Тĕплĕн сăнаса тăрас ĕçе организацилесе тата тăшманăн ытларах тĕрексĕр вырăнĕсене тĕплĕн палăртса, Манзий юлташ шăпах противник юханшыв урлă каçма пуçланă вăхăтра ун çине çĕмĕрсе тăкмаллах вăйлăрах пулни ӳçăнах курăнса тăратъ.

Черновицы енче тата фронтăн **Бессараби** участокĕнчи **Скулени** районĕнче çĕркаçипех çапăçусем пынă.

Фронтăн ытти участокĕсенче каçлăпкă иртнĕ.

Противник авиацийĕ июнĕн 27-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле **Борисов, Бобруйск, Могилев** хулисем çине пĕр хутчен мар бомбăсем пырса пăрахнă.

Пирĕн авиаци **Вильно, Бродси** тата **Барановичи** енĕсенче июнĕн 26-мĕшĕнче кунĕпех противникăн танк колоннисем çине татти-сыннисĕр атакăланă. Çав атакăсем хыççăн противникăн танкĕсене чылай сухатусем кӳнĕ. **Бухарестри** тата **Плоештири** вăрçă объекчĕсем çине пырса бомбăсем пăрахнипе вĕсене пысăккăн аркатнă. **Констанца** портне бомбăсем пăрахнипе çĕмĕрнĕ.

Пирĕн войскăсемпе командири тăшмана хирĕç хăюллăн та паттăрлăх çапăçаççĕ. Капитан Манзий, бронепоездсен дивизионĕн командирĕ, противникăн юханшыв урлă каçма хатĕрленекен моторизованнăй чăсĕсене оруд-пулеметпе салатса янă, çур ротăна пехотăна, ултă орудине тата виçĕ реправăна пĕтерсе тăкнă.

Старший лейтенант летчик Мисывлăшри çапăçура тăшманăн виçĕ молетне персе антарнă.

Кĕçĕн лейтенант летчик Шиян, манин 5 истребительне хирĕç çапă тухса, виçĕ сехет хушши ăнăçлăх пăçнă тата виçĕ хут аманнă пулса самолета хăйĕн аэродромне илсе

Пирĕн войскăсене халăх пур те пысăккăн пулăшать тата т çĕршыв умĕнчи тивĕçне тарăнăнланать.

Уманскипе Уэллес калаçни

ВАШИНГТОН, июнĕн 27-мĕш. (ТАСС). Совет Союзĕн США-ри посолĕ Уманский Уэллеспа калаçнă. Пичет представителĕсене Уманский çапла пĕлтернĕ: «Манăн çĕршыв çине нацистла Германи вăрă-хурахла тапăнни çинчен официально пĕлтерме эпĕ государственнăй секретарь обязанноçĕсене тăвакан патĕнче пултăм. Çак тапăну çине США правительстви мĕнле пăхнă пирки тата США-па Совет Союзĕ хушшинчи малашнехи отношенисем тĕлĕшпе эпĕ государственнăй секретарь обязанноçĕсене туса тăракантан уçăмлă ответсем илтĕм. Государственнăй секретарь обязанноçĕсене туса тăракан çапла пĕлтернĕ: Германи Совет Союзĕ çине тапăннинчен тухса тăракан пур ыйтусене те США правительстви вăхăта пĕр тăсмасăр тата туслă майпа пăхса тухĕ». Уманский тата Молотов каланă сăмахăн текстне июнĕн 26-мĕшĕнче ирхине Уэллеса пани çинчен те пĕлтернĕ. Юлашкинчен Уманский Уэллеспа иккĕшĕн хушшинчи калаçу питĕ ăшă кăмăллă атмосферăра иртни çинчен пĕлтернĕ.

США государственнăй департаменчĕ çакăн пек заявлени тунă: Германи Совет Союзĕ çине тапăнни çинчен Уэллеса официальнăй йĕркепе пĕлтермешкĕн Уманский государственнăй департаментра пулчĕ, тесе пĕлтернĕ Уэллес. Уэллес кăтартса панă тăрăх, вăл посола, президент тата государственнăй департамент политикине май, Совет правительстви материальнăй пулăшу çинчен США-ран ыйтнă пур ыйтусене те хăвăртрах пăхса тухаççĕ, вăл ыйтусене ырă кăмăлпах кĕтсе йышăнаççĕ, тенĕ.

Англо-Русски Парламентски Комитет В. М. Молотов юлташ патне янă телеграмма

Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн В. М. Молотов юлташăн ячĕпе Лондонран, Англо-Русски Парламентски Комитетран çакăн пек телеграмма килнĕ:

«Англо-Русски Парламентски Комитет фашистла Германи Совет Союзĕ çине пĕр çăлтавсăрах тапăннăшăн çилленсе тарăхнă çинчен пĕлтерет.

Комитет шанса тăрать: Совет Союзĕн хĕçпăаллă вăйĕсем нацистла бандитсен легионĕсене каялла тытса ывăтĕç, вĕсене пĕтерсе тăкĕç.

Тĕнчене нацистла преступниксенчен хăтарас тесе пĕтĕм вăйпа тăрăшакан ССР Союзне Англия пулăшу панине сăнаса тăрас тĕлĕшпе Комитет хăйĕн вăйĕ çитнĕ таран мĕн кирлине пĕтĕмĕшпех тăвĕ».

ФАШИСТЛА ВАРА-ХУРАХСЕНЕ ÇАПСА АРКАТАР!

Тăшман çапнине хирĕç виçĕ хут вăйлăн çапса ответлер, ăна пĕтĕмпех пĕтерсе тăкар!

☆ ★ ☆

Тăван çĕршывшăн кĕрешĕве тухар!

çĕр миллионлă Совет халăхĕ хăйĕн ализмлă тăван çĕршывне усал ман тапăннинчен сыхлама алла ăшал тытса отечественнăй вăрçа ĕ.

упашкар хулинчи ĕççыннисем хăй- пухăвĕсемпе митингĕсенче тăш- çапса аркатма, алла хĕçпăшал а тăван çĕршыва хŭтлеме фронта а хатĕр тăнине кăтартса пачĕç.

бочисем, служащисем тата хĕрача- ВЛКСМ Шупашкар хула комитет- тата хулари çар комиссариатне са хăйсене Хĕрлĕ Çар ретне илме са заявлениесем параççĕ. Коопера- техникумĕнчи комсомол организа- секретарĕ Эрютина юлташ техни- ри комсомолкăсем Матвеева, Басяе- Петрянкина, Анисимова, Зверева, атьева юлташсем хăйсене дейст- щи Арми ретне илме ыйтаççĕ. Вĕ- пулеметран пеме пĕлеççĕ, вĕсен н те тăваттăр оборона значокĕ- пур.

юловăйсемпе ресторансен трестĕн- пуçламĕш организацинчи комсо- цсем Лыков тата Бойков юлташ- хăйсен заявленийĕсенче çапла ççĕ: «Хамăр тăван çĕршыва, вĕ- и интересĕсене сыхлассине эпир н чи хисеплĕ ĕç тесе шутлатпăр, нпа та пире Хĕрлĕ Çар ретне сине васкатма ыйтатпăр».

мсомолка Белкова юлташ кĕçĕн естрасен курсĕнчен вĕренсе тух- х хăйне Хĕрлĕ Çар ретне илме ть. «Вышивка» артельри комсомол м 14 çын, пединститутри комсомол низаци комитечĕн секретарĕ Ни- ров юлташ, горисполкомри комсо- организаци комитечĕн секретарĕ пулина тата ытти нумай юлташ- хăйсене Хĕрлĕ Çар ретне хăвăрт- илме ыйтаççĕ.

ВЛКСМ Шупашкар горкомĕн секретарĕ.

Колхозниксен çĕкленĕвĕ

ЭЛĔК, июнĕн 25-мĕш. (Телефонпа, хамăр корр.). Урнă ыйтă Гитлер пирĕн социализмлă тăван çĕршыв çине вăрçăпа тапăнса кĕни çинчен пĕлсен, Выраç Сорăмри «Доброволец» колхозра кашни бригадăрах митингсем пулса иртрĕç. Колхозниксен выступленийĕсенче Германи фашизмне вĕçĕмсĕр курайманлăх, хамăран тăван çĕршыва пĕтĕм чĕререн юратни тапса тăратъ. Вĕсем кашни харпăрăй вырăнĕнче тŭрĕ кăмăлпа тăрăшса ĕçлесе, хамăран паттăр Хĕрлĕ Çара фронтра çĕнтерŭсем тума пулăшма пулаççĕ.

Колхозра халь хĕрŭллĕ ĕçсем пыраççĕ. Çак кунсенче арман пĕвине пĕвелесе ситереççĕ, унсăр пуçне 58 лаша валли вите, 50 ĕне валли выльăх карти, пахча-çимĕç подвалĕ т. ыт. тăваççĕ. Колхозниксем ăнса пулакан тырпула пуçтарса кĕме ăнăçлăн хатĕрленеççĕ: ку таринчен 1 жнейка, 1 молотилка, 3 велялка, триер юсанă, 65 урапа, 180 михĕ, 6 шăналăк хатĕрлесе ситернĕ.

Хĕрарăм—колхозра пысăк вăй. Вĕсем çак кунсенче 70 гектар çинче çумкурăксене çумларĕç.

— Эпир уйхирти тырпула пĕр тăкаламасăр пухса кĕртетпĕр, çапла тунипе хамăран Хĕрлĕ Çара пулăшатпăр. Эпир мĕн чухлĕ тăрăшса ĕçлĕпĕр, фронтра пирĕн мухтавлă воинсем фашистсене çавăн чухлĕ ăнăçлăн çапса аркатĕç,—теççĕ вĕсем.

Кашни колхозник пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлет. Колхозниксен политикăллă тата производствăллă активлăхĕ кунсеренех ŭссе пырать.

И. МОСЕЕВ.

Колхоз производствинче тăрăшса ĕçлеççĕ

КУКЕÇ. Фашистла бандăсем пирĕн çĕршыв çине вăрă-хурахла тапăнни çинчен пĕлсен, «Память Ленина», «Большая Волга» колхозсенчи колхозниксем, урса кайнă Германи фашисчĕсене пĕтĕм чĕререн ылханса, Совет çĕршывĕшĕн пурнăçа пама хатĕр пулнине кăтартса пачĕç. Агроном Иванов тата колхозник Мирославский юлташсем хăйсене Хĕрлĕ Çар ретне илме заявленисем пачĕç.

Фашистсен бандин сĕмĕрлĕхĕ тата тискерлĕхĕ колхозниксемпе колхозницăсене нимĕн чухлĕ те шиклентермест. Пачах урăхла, колхозниксем колхоз производствинче патриотла туйăмпа тухăçлăн ĕçлесе, хăйсем Ленин — Сталин партийĕ, Совет правительстви тавра татах таччăн пĕтĕçнине, хамăран тăван çĕршыва юратнине кăтартса параççĕ. Колхозра халь хĕрŭллĕ ĕçсем пыраççĕ. Колхозниксем çĕртме сухи, плотина тунă çĕрте, пахча-çимĕçсене пăхса ŭстерес тĕлĕшпе ĕçлеççĕ, уборкăра кирлĕ машинăсене юсаççĕ. Кашни хăйĕн вырăнĕнче ĕçлет. Колхоз государство умĕнчи пур парăмсемпе тŭлевсене те срокченех парса татать.

Колхозра пушартан сыхланас ĕçе лайăхлатнă, охранăна вăйлатнă.

Колхозниксем çар ĕçне вĕренессине те манса хăварmaççĕ. Колхозра халь ПВХО кружокĕ организациленĕ. Çак ик-виçĕ кун хушшинче 26 колхозник Осоавиахим членне кĕнĕ.

«Большая Волга» колхозра та колхозниксен хастарлăхĕ пысăкках çĕкленни курăнать. Юлашки виçĕ кун хушшинче çĕнĕ заем укçине 1.550 тенкĕ ытла пухнă. Колхозра ĕçсем ăнăçлăн пыраççĕ. Колхозниксем производствăра хăйăхрах ĕçлесшĕн тăрăшаççĕ.

Комсомол пуçламĕш организацийĕ Хĕрлĕ Çар ретне каякан юлташсене ĕсатма комсомолецсем уйăрнă.

М Т.

Çĕршыва тĕштырă ытларах парар!

Иртнĕ çулта пирĕн колхоз вăтамран гектар пуçне 15 центнер ытларах тĕштырă туса илчĕ. Уйрăмăнах эпир пахча-çимĕçсем туса илес тĕлĕшпе лайăх ĕçсем тума пултаратпăр. Помидор гектартан 500 центнер, купăста 316 центнер пухса илнĕ. Кунсăр пуçне тата арбуз, хăяр, кăшман т. ыт. çимĕçсем те нумай пулчĕç. Колхоз иртнĕ çулта пахча-çимĕçсем сутса 40 пин тенкĕ ытла тупăш илме пултарчĕ. Пирĕн колхоз членĕсем пуян та культурăллă çурăнаççĕ. Çавăнпăн ĕнтĕ вĕсем тăрăшса ĕçлеççĕ.

Кăçал эпир хамăр умма татах та пысăкрах задача—гектартан 17 центнертан кая мар тырă туса илес задача лартрăмăр. Паллах, ăна эпир ăнăçлăнах пурнăçлама пултаратпăр.

Пахча-çимĕç бригади кăçал вăтам шутпа гектартан пахча-çимĕç 300 центнертан кая мар туса илме палăртнă.

Германи фашизмĕ пирĕн телейлĕ те пуян пурăнакан çĕршыв çине вăрçăпа тапăнчĕ. Бандитсем пирĕнтен телейлĕ пурнăçа туртса илесшĕн. Çук, вĕсен аллисем кĕске, вĕсем ĕмĕтленни нихăçан та пурнăçа кĕрес çук. Мĕншĕн тесен пĕтĕм Совет халăхĕ, паттăр Хĕрлĕ Çарпа пĕрле, пŭтĕр çĕлен-калтасене çапса аркатма яланах хатĕр.

Эпир, колхозниксем, малашне те колхоз производствинче татах та лайăхрах ĕçлесе, пысăк тухăçлă тырпул туса илсе, хамăран хастарлă ĕçпе Хĕрлĕ Çара куллен пулăшса пыма пулатпăр. Пирĕн колхозниксем, кирлĕ пулсан, хĕçпăшал тытса, тăшмана çирĕп отпор пама яланах хатĕр!

С. РОМАНОВ.

Çĕмĕрле районĕнчи «Волга» колхоз председателĕ.

Заем укçине срокчен пухса çĕршыв оборонине тĕреклетер

Совет Союзĕ çине фашистла вăрăхурахсем тискеррĕн тапăннине ответлесе, пĕтĕм çĕршыв тăрăх ĕççыннисем митингĕсем пулса иртрĕç. Гитлерăн тата унăн бандин ирсĕр те ултавлă ĕçĕ çине тарăхса, пирĕн совет халăхĕ, пĕр çын пек пулса, отечественнăй аслă вăрçа çĕкленчĕ.

Рабочисемпе хресченсем, интеллигенци большевиксен аслă партийĕ тавра, аслă çулпуç Сталин юлташ тавра тата Совет правительстви тавра нихăçанхинчен те çирĕплех тата тачăрах пĕтĕçрĕç. Пĕтĕм совет халăхĕ çак отечественнăй вăрçа хутшăнса, хамăр тăван çĕршыв территорийĕнчен тăшмана хăваласа кăларма, фашистла çĕленкалтасене тĕпĕ-йĕрĕпех аркатса тăкма хатĕрри çинчен шантарса калать. Пĕтĕм халăх Молотов юлташ радио тăрăх каланă сăмахсене калать: Пирĕн ĕç — тĕрĕс ĕç. Тăшмана çапса аркататпăр. Çĕнтерŭ пирĕнте пулать!

Совет халăхĕн пĕрлĕхлĕ шухăш-кăмăлне, пĕрлĕхлĕ ĕмĕтне нимĕнле вăй та чарса лартаймĕ. Халăх ирĕкĕ хальхи вăхăтра пурнăçа кĕрсе пырать. Хĕрлĕ Çар, Тинĕс-Çар Флочĕ, Совет Авиацийĕ тăван çĕршыва геройла хŭтлеççĕ. Вĕсен мухтавлă ĕçне пĕтĕм халăх асăрхаса тăрать. Хĕрлĕ Çара, Тинĕс-Çар Флотне тата авиацине хăй ретĕнчен çĕнĕ вăйсем пама хатĕр тăрать.

Фабрикăсемпе заводсенче, колхозсенче ĕç туханăçлăхĕ ŭссе пырать. Совет Союзĕнчи кашни гражданин тата кашни гражданка, хăй хуть те мĕнле участокра ĕçлет пулсан та, тăван çĕршыва ытларах усă кŭме, производствăри хуть те мĕнле заданине те вăхăтра пурнăçа кĕртсе пыма, кирлĕ пулсан виличченех çапăçма хатĕр тăрать.

Чăваш республикинчи ĕççыннисем, пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле, предприятисемпе учрежденисенче, ялсенче пулса иртнĕ митингсенче отечественнăй вăрçăра фашистла çĕлен-калтасене çапса аркатса пĕтĕрес шухăш-кăмăллă пулнине тата çĕнтерŭ тума халăх вăйне хăна мар, мĕнпур укçа-тенкĕ кирлĕ чухлĕ пама хатĕр пулнине кăтартса пачĕç. Кăна çак фактсем те лайăх çинчен ĕçлеме вĕренеççĕ.

Красноармейски районри ĕççыннисем Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заема нихăçанхинчен те пысăк активлăхпа çырлачĕç. Рабочисемпе служащисем пĕр уйăхри ĕç укçи чухлĕ çырăннă. Виçĕ эрнери ĕç укçинчен кая çырăнаканни пĕр çын та пулман.

Çĕнĕ заем сарас ĕçĕн ăнăçлăхĕ уйрăмах çăкăнпа палăрса тăрать: колхозниксенчен чылайăшĕ заем укçине çырăннă вăхăтрах тŭлесе татаççĕ. Июнĕн 20-мĕшнĕ илсен рабочисемпе служащисем 16.946 тенкĕ, колхозниксемпе единоличниксем 67.289 тенкĕ заем укçи хывнă. Районри 9 колхозра подписка укçине пĕтĕмпех тŭлесе татнă. Заем укçи Германи фашизмне çĕмĕрсе тăкма пулăшнине халăх лайăх ăнланать.

Заем сарас ĕçре политикăллă-массăллă ĕçе лайăх туса пыни, заем уполномоченнăйсем тăрăшса ĕçлени лайăх результатсем парать.

Л. КОНСТАНТИНОВ.

Тăшмана пĕтĕмпех пĕтерер!

рмани фашисчĕсем Франци, Бель- Голланди, Греци тата Европăри халăхсене пусмăра кĕртсе ŭкернĕ ăн, пирĕн аслă та хăватлă çĕр- сине вăрă-хурахла тапăнчĕç. Çа- пек тискерлĕхе истори нихăçан та ан-ха.

рĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар телейлĕ т çĕршывĕ çине тапăнма хăтланнă кансене яланах тивĕçлĕ отпор па- Германи фашисчĕсене те тĕппипех рсе тăкĕ. Мĕншĕн тесен Хĕрлĕ нумай миллионлă пĕтĕм Совет хĕ куллен пулăшса тăрать. Кашни г гражданĕ, гражданки кирлĕ пулсан алла хĕçпăшал илсе, çĕршыва сыхлама тухас шухăш-кăмăлпа пурăнать.

Белофинсене хирĕç пулнă çапăçура хастарлăх кăтартнăшăн мана награда — Хĕрлĕ Ялав орденĕ пачĕç. Белофинсене эпир сывлама памасăр çĕмĕрсе тăкрăмăр. Белофинсен шалчи тулчĕ. Урса кайнă фашистсен те шалчи часах тулĕ.

Эпĕ — Совет гражданинĕ. Телейлĕ пурнăçа мана Совет власçĕ пачĕ. Совет çĕршывĕ çине тапăннă фашистсене эпир тĕппипех пĕтеретпĕр.

Орденоносец А. ЯКОВЛЕВ.

ир арçынсем вырăнĕнче ĕçлеме пулатпăр

скер тăшмансем—Германи фа- ĕçем пирĕн юратнă тăван çĕршыв вăрçăпа килсе тухрĕç. Вĕсем хăй- ирсĕр тата юнлă аллисемпе пирĕн кленекен пурнăçа туртса илесшĕн, н ирĕклĕ çĕршыва пусмăрласшăн. пурнăçа кĕреймĕ фашистсен ĕмĕ- Пирĕн Хĕрлĕ Çар тата Тинĕс-Çар лĕ нихăçанхинчен те вăйлă, вĕсем истла варваресене нимĕн юлмиччен рсе, таптаса тăкăç. Мĕншĕн тесен н Хĕрлĕ Çара, çавнашкалах Тинĕс- Флотне Совет халăхĕ чĕререн юра- пулăшать.

ир мар пуçларăмăр вăрçа. Юншăн хакан фашизм пирĕн мирлĕ ĕçсе- анскерлеме тапăнчĕ. Апла пулсан унăн йĕрĕнчĕк аллисене çапса а пĕлетпĕр. Фашизм хăйне валли м шăтăкĕ хатĕрлет.

ир, Çĕрпŭри зоотехникăллă опыт- станцинчи хĕрарăмсем, пирĕн мух- Хĕрлĕ Çар тăшмана çапса ху- шансах тăратпăр. Германи фа- ĕçем тăван çĕршыв çине тапăн- ответлесе, эпир ялхуçалăх машини- е—тракторсемпе, комбайнсемпе ĕç- вĕренме тытăннипе ответлетпĕр. фронта каякан арçынсем вырăнне мĕ яланах хатĕр тăратпăр. Пирĕн сем, пиччесемпе шăллăмсем, упăш- м тата тăвансем фронтра паттăр- кĕрешчĕр, тăшмана пуçĕпех аркат- ăкчĕр. Эпир, хĕрарăмсем, ăнса пу- и тырпула пĕр тăкаксăр пуçтарса пĕр.

орка—тĕштырă хуçалăхĕнчи чи от- и пулса тăрать, тенĕ Сталин юл- Çакна эпир, хĕрарăмсем, яланах тытатпăр. Совет Союзĕнчи хĕр- сем хăйсен тăван çĕршывне, пра- льствăна тата çулпуçа аслă Ста- чĕререн юратнине фашист-йытă- пĕлсе тăччĕр. Фашистла йĕрĕнчĕк- пирĕн çине тапăннине эпир чăтма араймастпăр, эпир хамăр çĕршыва рпа хŭтлеме яланах хатĕр.

отехникăллă опытнăй станцинчи рăмсем халĕ трактора вĕренме ты- ăмăр. Çак кунсенчех комбайна вĕ- не тытăнатпăр.

ир, Çĕрпŭ районĕнчи, çавнашкалах районсенчи мĕнпур хĕрарăмсене е те тракторсене, комбайнсене та- ытти специальноçсене вĕренме чĕ- ĕр.

Çĕрпŭри зоотехникăллă опытнăй станцинчи хĕрарăмсем:

УЗЬМИНСКАЯ, ИВАНОВА, СОФО- ОВА, ВАЗИКОВА, ШАРОНОВА, ФРОНОВА.

Тăшман пире çĕнтереймĕ

Отечественнăй вăрçă пуçланчĕ. Эпир пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисем отечествине, хамăран тăван çĕршыва юлашки тумлам юн юлмиччен сыхлатпăр. Çак вăрçăра Сталинла Конституци хĕвелĕ ăшăтса тăракан çĕршыва, Октябрьти революцире, граждан вăрçи çулĕсенчи хаяр çапăçусенче çĕнсе илнисене — ирĕклĕхе, наука çитĕнĕвĕсене тăшманран сыхласа хăварассишĕн çапăçатпăр.

Çак çапăçура совет интеллигенцийĕ, рабочисемпе тата колхозниксемпе пĕрле, партипе правительство тата аслă Сталин ертсе пынипе, хăйĕн пĕтĕм вăйне, пĕтĕм пĕлĕвне, кирлĕ пулсан хăйĕн пурнăçне те, пама хатĕр.

Медицина работникĕсем çине ответлă та хисеплĕ задача хунă, вĕсем мухтавлă Хĕрлĕ Çар боецĕсен сывлăхĕпе пурнăçне сыхласа хăварmалла. Çакна вĕсен фронтра та, тылра та тŭрĕ кăмăлпа пурнăçласа пымалла.

Пĕтĕм Совет халăхĕ пĕр çын пек пулса хăйĕн тăван çĕршывне паттăрран сыхласа хăварĕ, тăшмана пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкĕ.

Сывă пултăр Совет çĕршывĕ!

Сывă пултăр Коммунистсен (большевиксен) Партийĕ тата пирĕн çулпуç Сталин!

Г. ГУТМАН.

Медицина наукисен кандидачĕ.

Казак персе янă пуля, казак хĕçĕ пур çĕрте те тăшмана пырса тивĕ!

(Дон казакĕсем фронта каяççĕ)

ВЕШЕНСКАЯ СТАНИЦИ (Ростов облаçĕ), июнĕн 25-мĕш. (ТАСС). Ĕнер Вешенская станици хăйĕн ывăлĕсене социализмлă тăван çĕршыва хŭтлеме фронта ăсатса янă. Вĕсене ăсатма станицăри пĕтĕм халăх тухнă. Центральнăй площадьре уйăралас умĕн митинг пулса иртнĕ. Казаксене çул çине ăсатса янă май, СССР Верховный Совечĕн депутатĕ писатель академик М. А. Шолохов сăмах каланă.

— Çак отечественнăй вăрçăра,—тенĕ вăл,—эпир çĕнтерекенсем пулăпăр. Дон çинчи казаксем тăван çĕршывăн таса чиккисене хŭтлес ĕçре яланах малти ретсене пулнă. Эпир шанса тăратпăр, мухтавлă боевой традицисене эпир малалла илсе пырăр, тăшмана вăйлăн çĕмĕрĕр, сирĕн мăнасларçусем Наполеона çĕмĕрнĕ пекех, сирĕн аçусем кайзерла войскăсене аркатнă пекех хăвăтлăн аркатăр.

Шолохов юлташ юлашкинчен: «Сывă пултăр Сталин! Сывă пултăр аслă Совет халăхĕ!» тесе каласан, хăватлă овации кĕрлесе кайнă, «Интернационал» кĕвви шăранма пуçланă.

Тăван станицăран туйса кайса, казаксем çапла калаççĕ:

— Пĕлсе тăччăр фашистсем: казак тĕл персе янă пуля, казакăн çивĕч хĕçĕ фашистсем кирек мĕнле хушăка кĕрсе пытансан та, вĕсене пырса тивĕ. Татăклă çапăçăва пĕр шикленмесĕр каятпăр, тăшмана пĕтĕмĕшпех çĕмĕрсе тăкинченех кĕрешĕпĕр!

Арçынсем вырăнне юлма

Милютинри хăма çуракан заводри рабочисемпе работницăсем Германи хура çăхăнĕсене хирĕç çапăçакан паттăр Хĕрлĕ Çара, Тинĕс-Çар Флотне тата авиацине пулăшас майпа ĕç тухăçлăхне кулленех ŭстерсе пыраççĕ. Стаханов юлташăн бригади кулленхи норăна 180 процент таран тултарса пырать. Стахановка Максимова юлташ 2 норма, Анисимовпа Морозов юлташсем 1,5 норма тултарса ĕçлеççĕ.

Партипе правительство чĕнсенех тăван çĕршыва сыхлама каякан рабочисен вырăнне юлма хĕрарăмсем станоксем çинче ĕçлеме вĕренеççĕ.

М. СМЕТАНИН.

Заем укçине срокчен тŭлеççĕ

Красноармейски районри ĕççыннисем Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заема нихăçанхинчен те пысăк активлăхпа çырлачĕç. Рабочисемпе служащисем пĕр уйăхри ĕç укçи чухлĕ çырăннă. Виçĕ эрнери ĕç укçинчен кая çырăнаканни пĕр çын та пулман.

Çĕнĕ заем сарас ĕçĕн ăнăçлăхĕ уйрăмах çăкăнпа палăрса тăрать: колхозниксенчен чылайăшĕ заем укçине çырăннă вăхăтрах тŭлесе татаççĕ. Июнĕн 20-мĕшнĕ илсен рабочисемпе служащисем 16.946 тенкĕ, колхозниксемпе единоличниксем 67.289 тенкĕ заем укçи хывнă. Районри 9 колхозра подписка укçине пĕтĕмпех тŭлесе татнă. Заем укçи Германи фашизмне çĕмĕрсе тăкма пулăшнине халăх лайăх ăнланать.

Заем сарас ĕçре политикăллă-массăллă ĕçе лайăх туса пыни, заем уполномоченнăйсем тăрăшса ĕçлени лайăх результатсем парать.

Л. КОНСТАНТИНОВ.

Фашистла çăхансене хăюллăн касса ваклăр!

МАХАЧ-КАЛА, июнĕн 25-мĕш. (ТАСС). Ирĕке юратакан горецсем тăван çĕре урса кайнă тăшманран хŭтлеме тăраççĕ. Амăшĕсем, арăмĕсем хăйсен упăшкисене, ывăлĕсене отечественнăй аслă вăрçăна çакăн пек сăмахсемпе ăсатса яраççĕ: «Хăвăрăн пурнăçсене шеллесе тăмасăр, хамăран тăван çĕршыва хŭтлĕр».

Мобилизаци пунктĕсене горецсем пĕтĕм боевой снаряженипе — лашасем çине ларса, черкескăсем тăхăнса, пиçиххи çумне шашкăсем çакса пыраççĕ. Тăван çĕршыва хŭтлекенсем валли колхозсем хăйсен чи лайăх лашисене уйăрса параççĕ.

Январĕн 9-мĕш ячĕпе тăракан артельри колхозниксем тракторист-стахановецсене Басир Акаева, Гаджи Гаджиева тата ыттисене фронта савăнăçлăн ăсатса янă.

— Фашистла çăхансене хăюллăн касса ваклăр!—тенĕ тухса калакансене колхозниксем. — Дагестанри горецсен боевой чапне тŭрре кăларăр!

Январĕн 9-мĕш ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Шапи Дадаев, колхозниксем йышăннă тăрăх, Хĕрлĕ Çар валли çĕнĕ те чаплă сбруйăллă 9 лаша панă.

— Эпир вĕсене Хĕрлĕ Çар валли пăхса ŭстертĕмĕр,—тенĕ Дадаев юлташ.

Пиччепе пĕрле çапăçăва кайма хатĕр

ÇĔМĔРЛЕ. Хутарти çыхăну уйрăмĕнче ĕçлекенсен митингĕнче Кузьмин юлташ çапла каларĕ:

— Манăн пиччепе Хĕрлĕ Çар ретĕнче фашистла Германин урнă йыттисене хирĕç çапăçать. Эпĕ халĕ çыхăну уйрăмĕнче ĕçлетĕп. Манăн кăкăр çинче виçĕ оборона значокĕ. Фашистла выçă çăхансене хирĕç пиччепе пĕрле çапăçма кайма эпĕ яланах хатĕр.

Çыхăну работникĕсем митингра Морзе азбукине вĕренме, çыхăну ĕçне кăтартуллă туса пыма тата çулталăк планне срокчен тултарма пулчĕç.

С. БАТЬКОВ.

Бессарабине Румыни оккупацийĕсенпусмăрĕнчен крĕке кăларни вăхăт, июнĕн 28-мĕшĕнче, çулталăк тултарчĕ. УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Аккерман уездĕнчи Фурмановка ялĕнче ансе ларнă пĕрремĕш совет самолетĕ шайĕнче пулнă митинг. (1940 çулта июльте укерсе илнĕ).

А. Кричевский фото-укерчĕкĕ. (ТАСС).

Сывă пулччăр хăйсен тăван çĕрне сыхлакан паттăр совет халăхĕпе унăн Хĕрлĕ Çарĕ!

☆ ★ ☆

ЧИКĔ ПАТĔНЧЕ

Лагерь сывăрнă. Кĕтмен çĕртенех моторсем кĕрлени илтĕнчĕ. Боевой тревога панипе пирĕн часть пĕр самант хушшинчех çĕкленсе тăчĕ. Пирĕн тăван çĕр сийĕнче тăшманăн пирвайхи самолечĕсем вĕçеççĕ. Фашистсем пирĕн лагерь çине бомбăсем пăрахма, тен çĕршыва шалалла çĕмĕрсе кĕме те хăтланса пăхрĕç.

Нихăшне те тăваймарĕç вĕсем: зенитнăй батарейăсем хăватлăн пенипе вĕсене çавăнтах каялла çаврăнма тиврĕ.

Сăмахсăрах ăнланса илтĕмĕр: ултавлă тăшман совет чиккине пăснă, хăйĕн обязательствисене пылчăк ăшне таптаса путарнă, пирĕн юратнă тăван çĕршыва хирĕç вăрçă ĕçĕсем пуçланă.

— Фашистла ирсĕр çĕлен-калтана сийĕнчех çĕмĕрсе тăкар,—çакăн пек пулнă мĕнпур боецсен шухăшĕ.

Çавăн пекех пулчĕ приказ та.

Эпир, фашистла захватчиксене малалла кайма сийĕнчех чарса лартас тесе, чикĕ патнелле 8 километрлă хушăна нихăçанхинчен те хăвăртрах иртсе тухрăмăр.

Çак вăхăт тĕлне фашистсем государство чиккинчен 4 километрти К. ялне туртса илме ĕлкĕрнĕ. Пирĕн часть çак яла хĕвелтухăç енчен хупăрласа илме пуçларĕ.

Тăшман артиллерийĕ персе тăнине пăхса тăмасăр, эпир ял патнелле темиçе çĕр метр çывхарса пытăмăр. Малта, пĕрер çĕр метрта—танксене чăрмантармалли канав, унăн хыçĕнче пралуклă загражденди.

Подразделени командирĕ мана боевой задани пачĕ: отделенипе малалла тухмалла, пралуклă загражденди тĕлне персе тăмалла. Эпĕ çавăнтах хамăн боецсемпе пĕрле приказа пурнăçа кĕртме тухса карăм.

Эпир малалла пынине курса илсе, фашистсем танксене чăрмантарма тунă канав линийĕ çине артиллеририн вăйлăн пеме пуçларĕç. Снарядсем вĕçĕхĕррисĕр ӳкеççĕ, хура тăпра юписем хăпарта-хăпарта кăлараççĕ.

Акă фашистсен артиллерийĕ кĕрлеме чарăнчĕ, ун вырăнне пулемет каласа пуçларĕ. Тепĕр станковăй пулемечĕ вăрман ӳсланкинчен перет.

— Гринь юлташăн ручной пулеметне—малалла уйăрăлса тухмалла, тăшман пулеметне путарса лартмалла, — тесе команда патăм эпĕ, боеца тĕллев çине кăтартса.

Гринь юлташ кăтартса панă вырăна шуса çитрĕ, пулемета вырнаçтарса лартрĕ те пĕр черет персе яма кăна ĕлкĕрчĕ, сулахай енче пирĕн станковăй пулемет ĕçлеме пуçларĕ. Тăшман пулеметне лăплантартăмăр. Çак вăхăтрах пирĕн артиллери ял хĕрринче тата ялта хăйĕнче пĕр çĕре пухăннă фашистсем çине аркатса тăкмаллах вăйлăн пеме пуçларĕ.

Халĕ ĕнтĕ эпир кирлине турăмăр пекех туйăнать. Анчах та çук, бруствер патĕнче фашистсен снарячĕсем нумайрах çурăлма пуçларĕç, тăшман тупписем халичченхи пекех вăйлăн переççĕ. Тăшман пирĕн шухăша тавçăрса илнĕ тейĕн. Снарядсем ăçта ӳкнине сăнаса тăракан тепĕр çын тупăннă пулас. Анчах ăçта-ши вăл?

Эпĕ çакна асăрхарăм: эпир тин кăна фашистсен станковăй пулеметне путарса лартнă вăрман ӳсланкинче çăхансем лăпланма пĕлмесĕр вĕçеççĕ. Апла пулсан, вĕсен йăви патне такам хăпарнă.

Йышăннă решени ку расра та тĕрĕс пулчĕ. Йывăç çинче—çĕнĕ наблюдатель. Пирĕн снайперсем ăна персе антарчĕç. Çакă вăл фашистсен снарячĕсем ăçта килчĕ унта ӳкме пуçланинчен палăрчĕ.

...Юлашкинчен, эпир танксене чăрмантарма тунă канав патне тухма çул уçрăмăр, анчах та унпа туллийĕн усă курма май килмерĕ. Эпир сулахай енчен çĕмĕрсе пынă вăхăтра фашистсен группи—çирĕм çынна яхăн — канав патне пырса тухнă.

Эпĕ атакăна хатĕрленме команда патăм. Тăшман пирĕн патран çирĕм утăмра кăна. Акă вăл бруствер хыçĕнчен çĕкленсе тухрĕ. Маскировочнăй халатсемпе каскăсем тăхăннă симĕс мĕлкесем ыраш ăшне кĕчĕç. Вĕсем пире курмасăр, нимĕн те тавçăрса илмесĕр, пирĕн çинелле пыраççĕ.

— Огонь!

Автомат-пулеметсемпе винтовкăсем пĕр тимлĕн ĕçлеме пуçларĕç. Фашистла банда пĕр самант хушшинчех сайралса юлчĕ, сывă юлнисем мулкачсем пек тарчĕç.

Автоматчик-стрелоксем фашистсене пере-пере ӳкерчĕç. Хăшне-пĕрне штыксемпе чиксе пăрахрĕç. Ман çине икĕ фашист тапăнчĕç. Эпĕ пĕрне хамăн умрах персе ӳкертĕм, тепри манăн гимнастерка çаннине лектерме кăна ĕлкĕрчĕ, ăна тăван çĕршыв штыкĕ тĕшĕрсе антарчĕ.

Çак вăхăтра фашистла шакалсен тепĕр группи канава пырса кĕнĕ. Пирĕн вĕсене унтан хĕссе кăларас пулать! «Урра» тăван çĕршывшăн!» тесе кăшкăрса, канав çине вирхĕнтĕмĕр.

Гитлерла вояксем каскăсене хывса, аллисене çӳлелле тăратса, хĕçпăшалне урисем патне пăраххса... çапăçăва кĕчĕç...

Вĕсен йышĕ аллă çынна яхăнах.

Старший сержант **Н. ШАБОТА.**

«Правда», июнĕн 26-мĕш.

Кавалеристсемпе пилотсем

ТИРАСПОЛЬ, июнĕн 24-мĕш. **(Пирĕн ятарласа кайнă корреспондентсенчен телеграф тăрăх).** Тул çутăлса килнĕ вăхăтра тăшман Прут юханшывĕн леш енче тăракан Фальчу патĕнчен шыв урлă каçма пуçланă. Пирĕн пограничниксем совет çĕрĕн чиккисене пĕтĕм вăя хурса хӳтленĕ, анчах та тăшман хĕснине тытса чарайман: фашистсен йышĕ пограничниксем йышĕнчен темĕн чухлĕ пысăкрах пулнă. Каç пулнă тĕле пирĕн çыран çинче нумай пехота, танксем пухса тăратса, противник наступлени тума пуçланă. Тăшман чаçĕсене малалла кайма сийĕнчех чарса лартмалла, ăна çĕмĕрсе тăкмаллах отпор памалла пулнă.

Бомбардировщиксемпе истребительсем тĕлĕнмелле пысăк хăвăртлăхпа сывлăша вĕçсе çĕкленĕç. Вĕсем чикĕ урлă каçнă тăшман çине тĕрлĕ енчен пыра-пыра тапăннă. Çакă вăл калама çук вăйлă тата вирлĕ атака пулнă. Истребительсем кăна мар, бомбардировщиксен тăхăршар самолетлă хăшпĕр групписем те тăшман çине аялтан вĕçсе пынă, ун çине бомбăсем, вилĕм кӳрекен пулăсем тăкса иртнĕ. Самолетсем тăшман пехотипе танкĕсем çине пĕр вăхăтрах пырса тапăннă.

Результатсем питех те ăнăçлă пулнă. Нумай танксене сийĕнчех пĕтерсе тăкнă. Пехотăна калама çук пысăк сухату кӳнĕ. Тăшман речĕсем пăтрашăнса кайнă, вăл атакăран хăраса ӳксе, нимĕн тума те пĕлмен.

Çак самантра усă курса, совет кавалеристчĕсем тăшман çине капланса пынă. Хĕрлĕ юлануткăсем çапăçăва мĕнтери пысăк хавхаланупа, мĕнле пысăк хăюллăхпа пырса кĕнине сырса кăтартма та йывăр. Туртса кăларнă шашкăсене алăра тытса, вĕсем тăшман речĕсене çĕмĕрсе кĕнĕ, ăна каса-каса туранă, кĕпер патнелле хăвалана. Тăшман кĕпер çинче хирĕç тăма хăтланнă, анчах та каçмалли вырăн часах касса туранă салтаксемпе витĕннĕ. Хăватлă кавалери, çул çинче мĕн тĕл пулнине пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкса, тăшмана малалла та малалла хăвалана, ăна кĕпер çинчен хĕссе кăларнă, кĕпер çинче чарăнса тăмасăр Фальчу патне çити çапăçса кайнă. Утлă боецсен хавхалануллă вăйĕ, çĕнтерӳ тăвас шанчăкĕ çавтери пысăк пулнă, вĕсем «урра! тăван çĕршывшăн, Сталиншăн!» тесе кăшкăрса, Фальчу урамĕсене çĕмĕрсе кĕнĕ, часах ăна хăйсен аллине çавăрса илнĕ, тăшман чаçĕсене хăваласа кăларнă. Фальчуна туртса илнĕ хыççăн кăна, малалла та малалла каяс кăмăлне аран çеç тыса чарса, совет кавалеристчĕсем чарăннă.

Йăлтах лăплансан, çапăçу итогĕсене тунă хыççăн, кавалеристсем çакăн пек телеграмма янă:

«Пирĕн валли атака пуçлама хатĕрлесе панă летчиксене пирĕнтен халех тав тума пыйтатпăр».

Телеграммăна сийĕнчех кирлĕ çĕре илсе çитернĕ, хăйсен тусĕсем — совет кавалеристчĕсем янă салама летчиксем хаваслăн хумханса вуланă.

* * *

Фронтăн эпир тăракан участокĕнче тăшман хăйĕн авиацийĕн тĕп атакине Н. енналле сарса ячĕ. Çак самантра тăшман машинисен чылаях пысăк группи пырса тапăннă пĕр аэродромра совет самолечĕсем питех те сахал—пурĕ 6 истребитель кăна пулнă. Машинăсене сывлăша вĕçтерсе хăпартма шутлă минутăсем кăна юлнă. Тăшман самолечĕсене сийĕнчех шутласа кăларма май килнĕ—вĕсен 18 машина пулнă. Анчах та вĕсен йышĕ совет пилочĕсене хăратса пăрахайман. Вĕсем хăюллăн çапăçăва кĕнĕ. Нименĕн отряднe арпаштарса ярса, пирĕн истребительсем ăна 2—3-шер самолетлă группăсем çине уйăрса янă. Чылаях пысăк йышлă противникне хирĕç çапăçма йывăр пулнă. Анчах та, кирек мĕнле пулсан та, ăна урăх çĕрелле, аяккалла илсе каймалла пулнă.

Лейтенант Морозова виçĕ «Мессершмитт» тивнĕ. Вăл хăйĕн «Чайки» çинче тĕлĕнмелле ĕçсем тунă, машинăн маневрсем тăвас пултарулăхĕпе вĕсене ситиех усă курнă. Морозов хăйĕн пуçăвăрăнса каймалла ĕçне тума пĕр секунда та чарăнман. Ăна хирĕç тăшманăн виçĕ самолечĕ çапăçнă, çапăçура кам çине кам тапăннине те, кама кам атакăланнине те, камран кам пăрăнса кайнине те уйăрса илме пулман. Морозов хăйĕн задачине пурнăçа кĕртнĕ. Кашни маневрăпах вăл тăшмана аяккалла илĕртсе кайнă, юлашкинчен виçĕ «Мессершмитт» малтан тăл пулнă вырăнтан пайтах вуншар километр инçетелле илсе кайнă. Пĕр «Чайкăпа» виçĕ «Мессершмитт», пĕр совет летчикĕпе виçĕ немĕç летчикĕ хушшинчи çак çапăçу сехет çурă хушши тăсăлнă. Морозов çапăçăва çакăн пек çине тăрса вĕçленине тĕлĕнмелле пысăк чăтăмлăхпа, хăюллăхпа, паттăрлăхпа, тăван çĕршыва вĕçĕ-хĕррисĕр юратнипе кăна ăнлантарса пама пулать. Вăл ĕнланса пĕтнĕ, — ăна тăшман пульви амантнă, унăн вăй-хал пĕтсе килнĕ, патронсем пĕтнĕ, çапла пулсан та, вăл тăшмана улталаса, унтан пăрăнса кайнă, самолета чиперех антарса лартнă.

* * *

Совет соколĕсем совет чиккисене ывăнма пĕлмесĕр хӳтлеççĕ, йывăр çапăçăва хăюллăн кĕреççĕ. Пĕр кун хушшинче вĕсем 5—6-шар хут боевой вĕçеве кайса килеççĕ. Вăрçă пуçланиранпа пирвайхи виçĕ кун хушшинче вĕсем Германин нумай самолечĕсене персе антарнă. Пирвайхи кунах вĕсем пирĕн участокра фашистсен 10 летчикне тыткăна илнĕ. Вĕсем тăван çĕршыв, Сталин ячĕпе, отечественнăй вăрçăн пысăк тĕллевĕ ячĕпе хастарлăн та хăюллăн çапăçаççĕ, хăйсен мухтавлă ĕçне паттăрăн туса пыраççĕ.

Э. ВИЛЕНСКИЙ, С. ГАЛЫШЕВ.

Действующий çар.

(«Известия», июнĕн 25-мĕш).

Колхозниксен вăйлă патриотизмĕ

ПОРХОВ (Ленинград облаçĕ), июнĕн 25-мĕш. (ТАСС). «Красное ядро» колхозра яланах лайăх ĕçленĕ. Анчах та хальхи кунсенчи пек пысăк çĕкленӳ кунта халиччен нихăçан та пулман-ха. Хăйсен тăванĕсене, упăшкисемпе ашшĕсене фронта ăсатса ярса, колхозниксемпе колхозницăсем хамăран тăван çĕршывăн урса кайнă тăшманĕсене хирĕç çапăçакан паттăр Хĕрлĕ Çара мĕнпур вăя парса пулăшма тăрăшаççĕ. Хальхи вăхăтра ĕç нормисене хăшни çын ирттерсе тултарать. Мобилизациненнĕ çынсен вырăнне хĕрарăмсем, ватă колхозниксем йышăнаççĕ.

«Ленинский дубок» колхозра пурте-ваттисем те, çамрăккисем те—уя тухнă. Рядовой колхозниксем — Левашовпа Панкратов юлташсем бригадирсем пулса тăнă, çĕнĕ звеньевойсем çынсене йĕтĕн çумласа тасатма вырнаçтарса тухнă.

Берлина парăнтарни

(Историри фактсем)

Германин фашистла правительĕсем, çĕр чăмăрĕ çинчи мĕнпур халăхсене юн ăшне путарма ĕмĕтленекенскерсем, шовинистла пропаганда сарма вăрçăсен историйĕпе те усă курма тăрăшаççĕ. Хăйсен тахçанхи аслашшĕсене, нимĕçсен йытă-рыцарĕсене, славянсен ăрăвĕсене вутпа тата хĕçпе тапăна-тапăна асаплантарнăскерсене, фашистсем мухтаса хисеплеççĕ. «Король-салтак» Фридрих II вăрă-хурахла тапăнусем тунине фашистсем уйрăмах каппайса аса илеççĕ.

Анчах, чăннипе илсен, фашистсен çав тахçанхи аслашшĕсем çĕнтерӳсем нумаях тăвайман. Вăрçăсенче вĕсене час-часах çĕмĕрмеллех шакканă, пораженисем тӳстерсе намăс кăтартнă. Çакна май историри хăшпĕр фактсене аса илни интереслă пулать.

XIII ĕмĕрте тевтонски рыцарьсем, литовецсемпе славянсен мирлĕ ялĕсем çине тапăна-тапăна иртĕнсе кайнăскерсем, Новгород çине пырса тапăннă. Новгородецсем, Александр Невский ертсе пынипе, 1242 çулта Чудски кӳлĕ çинче пулнă сражение захватчиксене пĕтĕмпе пекех вĕлерсе пĕтернĕ, çавăн хыççăн вĕсем нумай вăхăт хушши вырăс çĕрĕсем çине килсе тăрăнма хăюллăх тупайман.

1410 çулта литовецсемпе славянсен ăрăвĕсем пĕрлешсе, Грюнвальд-Танненберг патĕнчи сраженире, Пруссири рыцарьсен «чечекне» пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкнă.

Чех халăхĕн националлĕ-ирĕклĕх вăрçи вăхăтĕнче те (1419—1436 çулсенче) Германири феодалсем йывăр поражениесем сахал мар тӳснĕ, ун чухне восстани тăвакансен боевой повозкисене курсанах çав феодалсен çарĕсем хăраса ӳксе пăраха-пăраха тарнă.

Германири фашистсем каçăхса кайсах унпала мухтанакан Фридрих II та чылай хут йывăрлăхсем тӳснĕ.

...1756 çулти августăн 29-мĕшĕнче Прусси королĕ Фридрих II, вăрçă пуçласси çинчен пĕлтермесĕрех, ун чухне хăйне уйрăм çĕршыв пулнă Саксони çине пырса тапăннă. Саксонин сахал йышлă çарĕ часах парăннă. Пруссаксем çапăçусăрах Саксонин столицине—Дрездена—тытса илнĕ, çĕршыва нимĕн хĕрхенӳсĕр çаратнă.

Хăйне хирĕç тăракан çуккипе çунатланнă Фридрих II Богемия (Чехия) çине пырса тапăннă,—Богемия çав вăхăтра Австрире пулнă.

Богемипе Чехие тытса илнĕ хыççăн, Прусси королевствин территорийĕ нумай пысăкланнă, вăл Центрти Европăри чи вăйлă государствăсенчен пĕри пулса тăнă. Çавăн пек хăрушлăха курса, Россия, Франция, Австрия, Швеция тата пĕчĕк государствăсем чылаййĕшĕ, хăйсем хушшинчи хирĕçӳсене вăхăтлăха манса, Пруссие хирĕç отпор пама пĕрлешнĕ. Европăра хирехирĕç тăракан икĕ лагерь пулса тăнă.

Пруссие хирĕç (ăна ун чухне Англия пулăшса пынă) союзниксем пит пысăк çар пухнă, союзниксен çарĕсем Пруссин хĕçпăшаллă вăйĕсенчен икĕ хута яхăнах нумайрах пулнă. Çапах та союзниксем тăшмана час çĕнтерме пултарайман, мĕншĕн тесен вĕсенчен кашнинех харпăрхăйĕн тĕллевĕсене пурнăçа кĕртме, йывăрлăха пĕтĕмпех ытти сем çине хума тăрăшнă. Союзниксен çарĕсене ертсе пыма уйăрнă штабсен планĕсем ялан пекех пурнăçа кĕмесĕр юлнă.

Вăрçăра пирвайхи çапăçусем пулсанах Франция вăрçа хатĕрленсе çитменни, Австри çарĕ вăйсăрри курăннă. Вăрçăн пĕтĕм йывăрлăхĕ Россия çине ӳкнĕ.

Императрица Елизавета Петровна хушнипе, 1757 çулти май уйăхĕнче вырăс çарĕ чикĕ урлă каçса, Хĕвелтухăç Пруссие пырса кĕнĕ. Австрипе Франци умлă-хыçлах пораженисем тӳснĕ вăхăтрах, вырăс çарĕ Тильзит, Мемель хулисене тытса илнĕ, Прегель юханшывĕ сывăхĕнче, Гросс-Егерсдорф ялĕ патĕнче пулнă çапăçура фельдмаршал Левальдтăн çарне çĕмĕрсе тăкнă, — Левальдт Пруссин чи лайăх полководецĕсенчен пĕри пулнă.

Пирвайхи сраженирех пруссаксен 29 оруди пĕтнĕ, вĕсен 900 çын тыткăна лекнĕ тата çапăçу хирĕнче 3 пине яхăн виле выртса юлнă. Çав çĕнтерӳ хыççăн вырăс çарĕсем Хĕвелтухăç Пруссин столицине — Кенигсберга — çăмăллăнах тытса илме пултарнă, ăна сыхласа тăракан çарсем Пруссин пулман. Анчах вырăс çарĕсен главнокомандующийĕ генерал Апраксин, продовольстви çителĕксĕр тесе, çарсене Хĕвелтухăç Пруссирен илсе тухнă. Кайран палăртнă тăрăх, генерал Апраксин çавăн пек туни ăнсăртран пулман, вăл Прусси майлă тăнă, малтанах хатĕрлесе хунă изменниклă план тăрăх ĕçлесе, Пруссие усă кӳнĕ.

Пруссие çĕмĕрсе тăкма вырăс çарĕсене Апраксин пек изменниксем, Пруссипе Англин шпионĕсем чăрмантарса пынă. Шпионсен хисепĕнче государство ĕçĕнчи тата çар ĕçĕнчи пысăк çынсем те пулнă. Малтанхи вăхăтра вĕсем Российăна Пруссие хирĕç вăрçа хутшăнмалла мар тума тăрăшнă, вăрçă пуçлансан, вара вырăс çарĕн командованийĕ туса хатĕрленĕ оперативлă плана тăшман аллине панă. Çапах та вырăс салтакĕсем, тăван çĕршывшăн хастарлă çапăçса, нумай хуттен тăшмана ураран ӳкерместлех шакканă.

1758 çулти хĕл пуçламĕшĕнче вырăс çарĕсем Кенигсберга тата пĕтĕм Хĕвелтухăç Пруссие йышăнса илнĕ. Анчах, Цондорф патĕнче вăйлă çапăçу пулнă, икĕ енĕ те пысăк сухатусем тӳснĕ хыççăн, Апраксин вырăнне уйăрса лартнă Фермор çарсене хĕллехи хваттерсене илсе гухнă.

Кун хыççăнхи çулсенче те событисем çавăн пекех пулса пынă.

1759 çулти августăн 12-мĕшĕнче Франкфурт хули çывăхĕнче, Одер юханшывĕпе Куннерсдорф патĕнче пруссаксемпе вырăс çарĕ хушшинче генеральнăй сражени пулнă, — пруссаксене сраженире Фридрих II хăй ертсе пынă. Çав çапăçура паттăр вырăс салтакĕсем чаплă çĕнтерӳ тунă. Тăшманăн 50 пин çынлă çарĕнчен 3 пин çынна яхăн кăна çăлăнса юлнă, Фридрих II аманнă, вăл тыткăна лекессинчен аран-аран хăтăлнă.

Куннерсдорф патĕнче çĕнтернĕ хыççăн Берлина кайма çул уçăлнă. Пĕрре çапнипех вăрçа вĕçлеме май пулнă. Пĕтĕм çар тăшман столици патне каяс тесе хавасланнă. Анчах каллех вырăс çарĕсене хĕллехи хваттерсене илсе кайнă.

1760 çулта Фридрих II, унăн противникĕсем çине тăрса вăрçаннипе усă курса, хăйĕн çарĕн тĕп вăйĕсене Силезипе Саксонне — австриецсене хирĕç янă, Берлинра пĕчĕк гарнизон кăна хăварнă. Вырăс çарĕн командованийĕ, союзниксемпе калаçнисем усăсăр пулнине курса, вĕсемпе калаçса вăхăта ахаль çухатас мар тесе шут тытнă,—çамрăк та талантлă генерал Захар Чернышевăн корпусне Берлин çине ямалла тунă. 1760 çулти октябрĕн 4-мĕшĕнче Чернышев корпусĕнчи кавалерин пысăк мар чаçĕсем, генерал Тотлебен ертсе пынăскерсем, Берлин укрепленийĕсем патне пырса çитнĕ.

Вырăс казакĕсем çинчен Берлинри хаçатсем темтеп суйса çырнă. Вĕсем Берлин патне çитсенех, хулара паника пуçланса кайнă. Хула урамĕсенче халăх тĕркĕшнĕ. Полицейскисем тарса пытаннă, государство учрежденийĕсем пушанса юлнă. Хула çынсем ниçта кайса кĕме пĕлмен. Пруссири чаплă вельможăсен ылттăн тĕслĕ каретисем лашисене сиккипе чуптарса ирте-ирте кайнă. Купецсем хăйсен пурлăхĕсене турттарнă. Сахал йышлă гарнизон йĕркерен тухнă. Хула комендантчĕ—хăравçă генерал Рохов—çавăн чухнех парăнас тесе шухăшланă.

Анчах хула комендантчĕ патне фельдмаршал Левальдт (вăл Берлинра сывалса пурăннă пулнă) тата кавалерин паллă генералĕ Зейдлиц пынă. Хула оборонине ертсе пыракки вĕсем хăйсем çине илнĕ, гарнизона çапăçăва хатĕрлесе тăратнă тата пулăшу ыйтма çынсем янă.

Хулари паникăпа усă курса, вырăс çарĕсем çапăçу чухне пит кирлĕ высотасене йышăнса илнĕ тата хулари çар тăракан вырăнсем çине артиллерирен пеме тытăннă.

Артиллери персе тăнă хыççăн çурçĕрте штурм пуçланнă. Пысăк мар икĕ колонна Котбусски тата Галльски хапхасем çине атака тунă. Колоннăсенчен пĕрине ертсе пынă подполковник Прозоровский тăшманпа тытăçса штыксемпе чиксех вăйлăн çапăçнă хыççăн, Галльски хапхана тата хапха çывăхĕнчи вырăна йышăнса илнĕ. Анчах ăна пулăшу паракан пулман, вара вăл чакнă. Котбусски хапха çине тунă штурм ăнăçсăр пулнă.

Çакăн хыççăн генерал Тотлебен (кайран ăна Прусси шпионĕ пулнăшăн суд тунă) вырăс çарĕсене Берлинран 12 çухрăмри Копеник ялĕ патне илсе кайнă. Çакăн çинчен Левальдтран хыпар илсенех, Прусси генералĕсем Клейст тата Гильзен хăйсен çарĕсене Берлин патне илсе пынă, хулана çирĕплетес тĕлĕшпе чылай ĕçсем тунă.

Çав вăхăт тĕлне Копеник ялĕ патне Чернышев корпусĕ, Берлин хулин хĕррисем патне Австри генералĕ Ласси ертсе пыракан отряд пырса çитнĕ. Чернышев пĕтĕм çарсене хăйĕн командованине илнĕ, хулана хупăрланă, октябрĕн 10-мĕшĕнче Берлина генеральнăй штурм тумалла тунă.

Хĕрсех атакăна хатĕрленнĕ вăхăтра, 1760 çулти октябрĕн 10-мĕш (çĕнĕ стильпе) ыран тенĕ чухне, çĕрле, Берлин парăннă.

Ирхине вырăс конници Берлин урамĕсене пырса кĕнĕ. Берлин çыннисем тĕлĕнсех кайнă. Берлинри хаçатсем вырăс çарĕсем погромсем тăваçĕ пусмăрласçĕ, тесе çырнă пулсан, пекки нимĕн те пулман, вырăс салтакĕсем хушшинче дисциплина çирпулнă. Хулара никама та çаратмаç Сĕмĕр элекçĕсемпе суеççĕсене те сутăнчăк журналистсене — нимĕн туман. Вĕсене кăштах хăратнă кăç Çав журналистсене пĕр плац çи пухнă, плац икĕ енĕпех алла çир патаксем тытнă салтаксене тăрат тухнă,—çакăнта вара Берлинри журналистсене приказ вуласа панă: кире сĕр ĕçсем тунăшăн сире строй вит кăларса хĕнемелле, анчах пĕреллĕ кăсаратпăр, тенĕ приказра.

Чернышев приказĕ тăрăх Берлин линче арсенала, тар тата хĕçпăшал вочĕсене аркатса тăкнă, Прусси гос дарствин казначействинче пулнă çасене конфискациленĕ.

Вырăс çарĕсем Берлинра тăватă хушши тăнă. Октябрĕн 13-мĕшĕнче хине вĕсем Берлинран тухнă. Вĕс хăйсемпе пĕрле пит нумай çар хат рĕсем тата хулан çăрауççине илкайнă. Çав çăрауççи Мускаври музесенчен пĕринче халĕ те усранать. Берлинра пурăнакансем вырăс çарĕ хал ха тивменшĕн, йĕркеллĕ пулнăш салтаксене тавтуса юлнă.

Прусси столици — Берлин — рăнни пĕтĕм тĕнчене вырăс çар вăй-хăватне кăтартса панă, вăл Пруси çарне çĕмĕрсе тăкнă кăна унăн столицине те йышăнса илнĕ.

Çакăн пек ĕнтĕ историллĕ фактсе Германири юнĕçсен фашистсен хăйс тахçанхи аслашшĕсен çĕнтерĕвĕсем мухтанмалли нимĕн те çук. Вĕсе вырăс çарĕ яланах çĕмĕрсе пынă. вет Союзĕ çине сĕмĕррĕн тапăннă ф шистла Германия та çавнах туя ССР Союзĕн паттăр Хĕрлĕ Çарĕ циализмлă тăван çĕршыври пĕтĕм лăх пулăшнипе фашистсене ĕмĕрлĕх тата яланлăхах çĕмĕрсе тăкĕ.

Иден общинăсен палатинче тухса каланă сăмах

ЛОНДОН, июнĕн 25-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: ĕнер Англири общинăсен палатинче ССР Союзĕ çине Германия тапăннă май Англия ССР Союзĕ тĕлĕшпе тытса пыракан политика çинчен тăракан сăмах пынă,—пирĕн шĕн яланах çакă паллă пулнă: Совет правительстви, хăйпе Германи хушшинчи отношенисенче нимĕнле чăкăт ăш та ан пултăр тесе, калаçусене ирттересшĕн пулман, тенĕ Иден.

Германи ултавлăхĕн юлашки демонстрацийĕ, — тенĕ малалла Иден, — вăл Совет Союзĕ çине талăнни, хăй пĕхут çеç мар ĕнентерсе пан сăмахсене пăсни çакна пĕтĕм тĕнчен çĕнĕрен тата татăклăнах кăтартс пачĕ: национал-социалистсем пĕтĕм тĕнчере пуçпулса тăма тăрăшаççĕ Гитлер хăй ĕнентерсе каланă сăмах намăса пĕлмесĕр улăштарнине тата тепĕр хут кăтартса пачĕ. Паян вă пакт тăвать, ыран агресси пуçлат хĕлле—лăплантаракан калаçусем, çул ла—бомбăсемпе танксем. Халĕ ĕнт тĕнченне нимĕнле националистла махи нацисем те улталамăç. Мĕнпур халăх сем, хăйсен управлени системисемт географиллĕ положенийĕсем кирек мĕн ле пулсан та, вĕсем пурте çакна ăн ланса илме тивĕçлĕ: национал-социа листла система пур чухне, вăл мĕн пур çĕршывсен хăрушăрлăхĕпĕн п тех те пысăк хăрушлăх кӳрет. Вĕсе шухăшĕсем кирек мĕнле пулсан т çак шухăш тĕп вырăнта пулмалл

Россия çине,—тенĕ малалла Иден, нимĕн асăрхаттармасăрах киревсĕррĕ предателле пырса тапăнчĕç. Нимĕссе хăйсем пуçланă провокацине мĕн чу лĕ те пулин чăнласа тӳрре кăлара та пулин хăтланмарĕç. Вырăссем хă сен таван çĕрĕшĕн кĕрешеççĕ. Вĕсе тĕнчере пуçпулса тăма ĕмĕтленеке çынна хирĕç кĕрешеççĕ. Çак кĕреш вăл пирĕншĕн те пĕртен пĕр задач пулса тăрать. Çак юлашки агресс умĕнче эпир хамăран кĕрешĕве вă сăрлатмăпăр, ăна татах та ытларе тăрăшса вăйлатăпăр.

Малалла Иден çапла каланă: Сов посолĕ мана çапла пĕлтертĕ: хамăр вăйсене координацилес тĕлĕшпе эп Россипăна хамăран çар миссийĕпе эк номикăллă миссине ярасси çинчен п нă сĕнĕве ССР Союзĕн Правительст йышăннă **(алă çупаççĕ).**

Юлашкинчен Иден Американ Лонд на тавăрăннă посолне Вайнанта сала ланă тата çапла каланă: юлашки т миçе кун тата юлашки темиçе сехет США Англине татти-сыпписĕр матер альнăй пулăшнипе фашистсене ĕмĕрлĕх тата яланлăхах çĕмĕрсе тăкĕ.

Уйхирсенче тырпул пухса кĕртме хатĕрленеççĕ

ПЕТРОЗАВОДСК, июнĕн 26-мĕш. (ТАСС). ТАСС корреспонденчĕ телефон тăрăх Кестеньгапа çыхăнса калаçнă. Аппарат патне Кестеньга райисполкомĕн председатель заместителĕ Маковеев юлташ пынă.

— Совет информаци бюровĕ панă пĕлтерӳрен куратпăр,—тенĕ Маковеев юлташ,—нимĕçсен темиçе самолечĕ Кандалакша районĕ çине бомбăсем пăрахма, Кулоярви районĕнче Германи войскисен хăшпĕр чăсĕсем чикĕ урлă каçма хăтланнă. Кандалакша станци — пирĕн çывăхри кӳршĕ, Кулоярви—пирĕн районри пунктсенчен пĕри. Кестеньга районĕнчи ĕçсыннисем, Хĕрлĕ Çарпа авиацин никам çĕмĕрейми хăватне çирĕппĕн шанса тăракан ĕçсыннисем, кашни хăйĕн вырăнĕнче пĕтĕ вăйран тăрăшса ĕçлеççĕ.

Колхозлă уйхирсенче тырпул пух кĕртме хатĕрленеççĕ. Леспромхо промкомбинат тата районри ыт предприятисем те графика пĕр пăсм сăр ĕçлеççĕ. Районри халăх халĕ пу са тăнă положенине пĕтĕмĕшпех ăнл нать. Пирĕн районра, пĕтĕм çĕршыв пекех, калама çук пысăк çĕкленӳ. Т са та хаклă сĕре хӳтлеме кайнă а çынсем вырăнне производствăра, у режденире хĕрарăмсем, йăмăкĕсем т раççĕ. Пирĕн районра пурăнакан ка ни çын—пĕчĕккисенчен пуçласа ва тисем таранах—хамăран тĕрĕс ĕçлĕ тăван çĕршывшăн хăйсен пурнăçне п ма та хатĕр.

Нимĕç йытă-рыцарĕсене çĕмĕрсе тăкни çинчен

(Пăр çинчи çапăçу)

«1242. Александр Невский выступает против немецких рыцарей, разбивает их на льду Чудского озера, так что прохвосты были окончательно отброшены от русской границы».

КАРЛ МАРКС.

...Унтанпа ĕнтĕ çичĕ ĕмĕре яхăн иртрĕ. Ун çинчен эпир истори халанă ырăх çеç пĕлетпĕр.

Акă пирĕн умра истори кĕнекисен граници сем. Эпир вĕсем тăрăх çыратăр: вырăс халăхĕ ĕлĕкех хăюллă та ысăк вăй-халлă пулнă,—тăван çĕршывăн тăшманĕсене ĕлĕкех çапа-çапа апчăтнă, иртнĕ ĕмĕрсенче те унăн пысăк геройсем пулнă. Халĕ пирĕн халăхсем тата та вăйлă: вĕсем—паттăр, хюллă, вĕсен пин-пин герой, вĕсем ырçăн ешкер пек çар пырать...

1. XIII ĔМĔРТИ РУÇ ÇИНЧЕН

XIII ĕмĕрте пĕтĕм вырăс çĕршывĕ, халă историллĕ Руç, уйрăм феодальлă княжествăсем çине пайланса тăнă. Вашни княжество пуçĕнче уйрăм князь пулнă. Вăл хăйĕн йĕркисемпе урăннă. Княжествăсем хушшинче часах вăрçăсем пулса иртнĕ, феодалăм пĕр-пĕринпе харкашнă.

Хăшпĕр княжествăсенче (Новгородра, Псковра) вечĕ тенĕскер пулнă. Вечĕ—халăл хула çынĕсен пухăвĕ, урăхла каласан, демократиллĕ япала евĕрлĕскер. Гулаш енчен çакă вăл тап-таса демократи пулнă: пĕтĕм халăх площадь тĕп ыйтусене татса панă, унăн ренийĕсем вара пурнăçа кĕрсе пынă. Новгородри вечĕре, Новгородри халăх ухăвĕнче, чăннипе, кирлĕ ыйтусене урне те укçа татса панă. Пуянсен физически вăй пулнă, вĕсен «кăмăллă ĕкĕтсем» пулнă, çав йĕкĕтсем, вечĕна ырсан, пуринчен те хытăрах кăшкăрă, час-часах чышкăсене те ĕçе янă». (В. И. Калинин).

Тĕрĕссипе илсен, кунта боярсем — çултра сĕрхуçисем — пуçпулса тăнă. Вĕсем халăх массисене эксплоатацилеç пурăннă. Новгородра эксплоататорсене хирĕç восстанисем те пулса иртнĕ.

Руç политика тĕлĕшпе уйрăм княжествăсем çине вакланса тăни князьсемпе боярсемшĕн усăллă пулнă пулин, халăх массисемшĕн вăл йывăр япала пулнă. Ĕçсыннисемшĕн лăпкă урăç пулман. Пĕр енчен, тутар-моголсем çаратса тăнă; тепĕр енчен, ведсем, нимĕç рыцарĕсем хĕссе килеç. Руç шучĕпе пуяс, вырăс çынĕсене касас та ваклас, юлнисене чура туса сутас, тенĕ вĕсем.

Тутар-монголсен пусмăрĕ, 1237 çулăн пуçланса 1462 çула çитиччен пыçкер, Руç сахал мар вăйсăрлатнă. Тутар-монголсем 1237—1238 çулхи хĕлĕ вырăссен ялĕсемпе хулисене чылайăшне çунтарса янă, Рязань, Коломна, Ярославль, Юрьев, Дмитров, Переяславль, Ростов хулисене çăвăрса илнĕ. Киева çĕмĕрсе тăкнă (1240). Мускава çитарса янă. Новгород патнелле çывăрса пынă.

Карамзин историк çырнă тăрăх, çав хăтра малтан хуласемпе ялсем чечекисе ларнă вырăнсенче кĕл куписем, хлĕ çынсен кĕлеткисен куписем çеç юнă. Çав кĕлеткисене тискер кайăксем, çăк-çăхансем çинĕ. Хутран-сăтрен ăмансенчен çынсем тухни курăнкаланă. Вĕсем хăйсен тăван çĕршывĕшĕн ялăнса макăрнă.

Тутар-монголсем Новгородпа Псков халисене çеç çитсе çаратайман. Новгород патне çуркуннехи шыв-шур салăса кайнă пирки пырайман. Новгород хулинче çав вăхăтра вунчĕ çулхи Александр Ярославович (1220—1263) князьра ларнă. Шăпах çак вăхăтра ĕнтĕ, тутар-моголсем Руç тăрăх урса асса çӳренĕ хине, Руçа хирĕç тепĕр ирсĕр тăшман ăкса тухнă.

2. НИМĔÇСЕН ЙЫТĂ-РЫЦАРĔСЕМ «ВЫЛЬĂХ КУЛЬТУРИНЕ» САРАÇÇЕ

Нимĕç рыцарĕсем Руçа çавăрса илесси çинчен тахçанах ĕмĕтленнĕ. Хамăр вĕсем, Руçа тутар-моголсем çаратвăйсăрлатнипе усă курса, вырăс халăхĕ çине асар-писер вăрçăпа килме çланă. Хăйсен усал ĕмĕтне вĕсем ăнпе витнĕ: славянсен йăхĕсене лайăх не куçаратпăр, тенĕ. Чăнипе вĕсем, Маркс сăмахĕсемпе каласан, «христиан-германла выльăх культури» сарнă.

Нимĕç феодалĕсем XII ĕмĕр вĕçĕнче XIII ĕмĕр пуçламăшĕнче Балти тинĕс таврашĕнчи çĕрсене туртса илме тăнаççĕ. Çакнашкал ĕçсене тумашăн вĕсем 1128 çулхинче ятарласах вăй-хурахсен ушкăнĕ (Тевтонский орден) организациленĕ. Çав ордена Германи помещикĕсем тăнă.

Балти тинĕсĕ таврашĕнчи çĕрсем тăван çĕрсем вырăнĕнче шутланнă. Çак çĕрсенчи юханшывсенче пулăсем çăмай пулнă. Кунта вăрман кайăкĕсен хаклă йышши тир-çăмсем нумай пулнă. Унсăр пуçне тата питех те хаклă чул — янтар тупнă. Ĕлĕк-ĕвал çак çĕршăн грексен, арабсен купецĕсем çитах кайса кĕнĕ. Германин йытă-рыцарĕсем те ун çинчен ĕмĕтленнĕ.

Пурăнасса кунта тĕрлĕ йăхсем: эстсем, ливсем, латышсем, курсем тата славянсем пурăннă. Çак йăхсем чылайах культурăллă халăхсем пулнă.

Пĕррехинче (1198 çул), Балти тинĕсĕнче вăйлă çил-тăвăл тăнă кун, Хĕвеланăç Двина шывĕн çыранне пĕр карап пырса çапăннă. Çакă вăл нимĕç купецĕсен карапĕ пулнă. Нимĕçсем: эпир — тинĕс çулçӳревçисем, тесе суйнă. Çак вырăнсенче пурăнакан йăхсем вĕсене кăмăлпа йышăннă. Анчах нимĕçсем кунта ырă кăмăлпа килмен. Çак «нимĕç варвар-тăмпайĕсем» çаратма килнĕ, çаратма тытăннă.

Германирен вăрă-хурахсем килсех тăнă. Католикла тĕн йĕркисене сарма епископсем килнĕ. 1200 çулта çуркунне епископ Альберт Апельдернский 23 карап çарпа килнĕ. Кунти халăхсене вара ирсĕр «апостол» Альберт вутпа та хĕçпе тĕне кĕртме тытăннă.

1199 çулта ливсем восстани туса «апостол» çарĕсене çĕмĕрсе тăкнă.

Вăрă-хурахсем татах килнĕ.

1201 çулта Альберт, хăйне валли çирĕплех вырăн тăвас тесе, хăйĕн резиденцине Рига хулине куçарнă. Хăй тавра вăрă-хурахсен, çăткăнсен орденне («турă рыцарĕсен», «Марии святой», «меченосецсен» орденне) организациленĕ.

1228 çулта эстсене, ливсене парăнтарса çитернĕ. Эстсене, ливсене, латышсене тата ыт. хырçăсем тӳлеттернĕ, баршинăра ĕçлеттернĕ, чиркӳсем, монастырьсем, крепоçсем тутарнă. Паллах, нимĕçсем культура сарасси çинчен сăмах та пулма пултарайман. Нимĕçсем хăшпĕр йăхсене йăлтах пĕтерсе лартнă. Çаратасси, çунтарасси, вĕлересси,—акă нимĕç йыт-рыцарĕсен «культурăллă» ĕçĕсем. Рыцарьсенчен пĕри, Литвара пулнăскер, çакăн пек çырса хăварнă:

«Язычниксене чикеççĕ те касаççĕ, çак мĕскĕнсене аллă çын таран вĕлернĕ, ялне çунтарса янă, çулăм пĕлĕтелле питех те çӳлĕ çĕкленет... Язычниксене нумайăшне хĕнесе пĕтернĕ, вĕсен арăмĕсене, ачи-пăчисене туртса илнĕ...»

Çавăнпа ĕнтĕ Балти тинĕс таврашĕнче «нимĕç» (баронĕ, рыцарĕ) тенĕ сăмах чи усал, чи тискер те ирсĕр тенипе танах пулнă.

Çак йăхсем нимĕçсене хирĕç кĕрешнĕ, пĕрре кăна мар восстанисем тунă.

Нимĕçсем хăйсен юнлă аллисене Руç çинелле чăсма пуçланă, Руçа хирĕç «хĕреслĕ походпа» килме тытăннă.

3. ВЫРАС ХАЛАХĔ ХАЙĔН ИРЕКЛЕХЕШĔН ХАСТАР ÇАПАÇАТЬ

Нимĕç çăткăнĕсем Новгородпа Псков çĕрĕсене тытса илес шутпа вăркăнса çӳренĕ.

Новгород пуян хула пулнă. Унăн тем сарлакăш çĕрĕнче тĕрлĕ вăрманти тискер кайăксем — сăсарсем, тилĕсем, упасем, вакшасем тата ыт. те пулнă. Унта тĕрлĕ йышши хаклă металсем пулнă.

1206 çулта нимĕç рыцарĕсем Руç çине малтанхи хут тапăннă. Анчах вĕсене хăваласа янă.

1237 çулта, тутар-монголсем Руçа çунтарса çӳренĕ вăхăтра, Римри папа Руçа хирĕç поход тума чĕнӳ кăларнă. Ун тăрăх Руçа хирĕç пĕтĕм орденсем (меченосецсем, тевтонецсем, шведсем) тухмалла пулнă.

1240 çулта, çулла шведсен çарĕсем Руç çине, Новгород çине килме пуçланă. Вĕсен пуçĕнче герцог Биргер тăнă. Вĕсем 1240 çулти июль уйăхĕнче Нева шывне кĕрсе, Ижора шывĕ юхса тухнă тĕлте, якорьсем янă та чарăннă.

Биргер вырăссен князĕ патне: «Пĕтĕм çĕршыва хăвпа пĕрлех тытса илетĕп», тесе çырса янă.

Александр Ярославович ешкер (ополчение) пухнă та, шведсене хирĕç тухнă. Унăн çарĕсем нумай йышлă пулман. Çитменнине тата унăн хатĕрленсе тăма та вăхăт пулман. Унăн пĕтĕм планĕ те — тăшмана сасартăк пырса тапăнасси пулнă.

Александр паллă çын, пысăк талантлă организатор пулнă. Ана халăх пулăшса тăнă. Вăл хăйĕн умне пĕтĕм Руç интересĕсене сыхлас тĕллеве лартнă.

1240 çулти июлĕн 15-мĕшĕнче, каçхине, Александр çарĕсем шведсене хупăрласа илнĕ. Тăшмансене пĕтĕмпех çапса аркатнă. Каппайăк Биргера хăйне те лектернĕ. Александр ун питне сăнăпа чикнĕ. Шведсен виллисене виçĕ карап çине тиенĕ. Вырăссен çарĕсем 20 çын таран çеç сухатнă.

Александр хăйĕн юратнă çарĕсемпе (вăл кашнинех ятран пĕлнĕ) Новгорода хаваслăн тавăрăннă. Вĕсене пĕтĕм халăх кĕтсе илнĕ. Çакăн хыççăн Александра «Невский» тесе ят панă.

Нимĕç рыцарĕсем çаплах чарăнман. Çак çулхинех (1240) вĕсем вырăс çĕрĕсем çине сĕмсĕрленсе кĕрсе кайпă. Сутăннă боярсем пулăшнипе, вĕсем Псков патне çитнĕ. Рыцарьсем вырăс халăхне пусмăрласа çаратма тытăннă. Çынсене вĕлерсе тухнă. Вырăссен ачисене турта-турта илнĕ. Хĕрарăмсене ирĕксĕрленĕ... «Апостолсем», йытă-рыцарьсен пуçлăхĕсем, «турăшăн килăн хĕстерсе лартнă. Вырăссем хастарланса кайнă. Нимĕçсем пăтрашăнса кайса нăм йĕркесĕр тарма тытăннă. Яка лăр çинче лаша-мĕнĕшех пере-пере аннă. Шыва путнă,—çуркуннехи пăр çирĕп пулман. Хăшĕсем тата ура та ярса пусайман.

Çапăçу ытла та халăр пулнă—пĕтĕм пăр юнпа хĕрелсе кайнă. Çичĕ çухрăм хушши нимĕç рыцарĕсен виллисемпе витĕннĕ.

Çак чаплă çапăçăва историре: «Пăр çинчи çапăçу» теççĕ.

4. НИМĔÇСЕНЕ ЧУДСКИ КУЛ. ЛИ ПАРĔ ÇИНЧЕ ÇЕМĔРСЕ ТАКНИ

Анчах 1241— 1242 çулсенчи событисем кунпах пĕтмен-ха. Икĕ енĕ те—вырăссем те, нимĕç вăрă-хурахĕсем те—татăклă çапăçăва хатĕрленнĕ.

Нимĕç рыцарĕсем пĕтĕм вăйне пухнă. Руçа хирĕç мĕнпур захватчиксем пĕрлешнĕ.

Александр Невский малтанхи çĕнтерӳсемпех çырлаха ларман: тăшман питех те тискер пулнине, ăна йăлтах çĕмĕрсе тăкма кирлине вăл лайăх пĕлнĕ.

Тевтонски рыцарьсене хирĕç Александр хăйĕн çавтери пысăк ешкерĕпе тухнă. Александра пулăшма унăн шăлнĕ Андрей хăйĕн çарĕсемпе килнĕ. Ăна ашшĕ те пулăшнă. Псков хули те ешкер янă.

Александр Невский хăйĕн планне лайăх шухăшласа тунă. Ку ĕçре те унăн пысăк таланчĕ курăннă.

Нимĕçсем Александр çарĕсенчен темиçе хут лайăхрах хĕçпăшалланнă пулнă. Вĕсем утлă çарпа килнĕ. Анчах утлă çар юрăхлă, çаврăнкалама майлă вырăнсенче çеç ăнăçу тума пултарнине Александр аван пĕлнĕ. Çаксене шута илсе, Александр нимĕç рыцарĕсене хирĕç пăр çинче çапăçма йышăннă.

1242 çулти апрелĕн 5-мĕшĕнче вырăс çарĕсем Чудски кӳлли патне çитнĕ. Кунче вĕсем сасартăк тапăнас тактикăпа мар, урăхла тактикăпа çапăçма шутланă: тăшмана кĕтсе илнĕ. Çарсем Узмен ятлă пĕчĕк шыв патĕнче, чи пысăк чул çыран — Вороний Камень тĕлне йĕркеленсе тăнă. Ку вара тăшмана çыран çине тухма чармалли вырăн пулнă.

Нимĕçсем сывхарса килнĕ. Вĕсен хăйсен тактика пулнă. Войскăсене саваллă пек (виçкĕтеслĕх евĕрлĕ) тăратса вырăс çарĕсем ăшне çĕмĕрсе кĕмелле тунă. Малта, аяккинченех утлă воинсем пынă, варĕнче ахаль воинсем пулнă.

Çак строя вырăссем «сысна», тенĕ. Александр çак «сысна» пырса кĕрес тĕле маскировка тунă. Хăйĕн тĕп вăйĕсене як аяккă тăратнă, савăла валли пушă вырăн хăварнă. Вырăс çарĕсем хушшине, нимĕç çарĕсем савăлланса кĕрсе кайсанах, вĕсене хĕссе лартмалла пулнă, çавăн хыççăн нимĕç «сысни» хăйĕн «сăмсипе» чул çырана çитсе пемелле пулнă.

Александр планĕ пит те тĕрĕс пулнă. Нимĕç вăрă-хурахĕсем, хăйсен «сыснипе» килсе, вырăс çарĕсем хушшине кĕрсе кайсанах, вĕсене питех те вăйлăн хĕстерсе лартнă. Вырăссем хастарланса кайнă. Нимĕçсем пăтрашăнса кайса нăм йĕркесĕр тарма тытăннă. Яка лăр çинче лаша-мĕнĕшех пере-пере аннă. Шыва путнă,—çуркуннехи пăр çирĕп пулман. Хăшĕсем тата ура та ярса пусайман.

Çапăçу ытла та халăр пулнă—пĕтĕм пăр юнпа хĕрелсе кайнă. Çичĕ çухрăм хушши нимĕç рыцарĕсен виллисемпе витĕннĕ.

Çак чаплă çапăçăва историре: «Пăр çинчи çапăçу» теççĕ.

5. ПИРЕН ĔÇ — ТЕРЕС ĔÇ, ТĂШМАНА АРКАТСА ТĂКАПАР.

Нимĕç фашисчĕсем «пăр çинчи çапăçăва» аса илмĕç юратмаççĕ. Вĕсен историкĕсем, суйса, — тевтонецсем славянсене хăвăрт çĕнтернĕ, тесе мухтанаççĕ; германецсем «паттăрлăхĕ» çинчен çыраççĕ. Анчах çак çăмăлтăй «паттăрсен» хальхи йăхĕсем XIII ĕмĕрте мĕн пулса иртнине пытарма хăтланаççĕ, çав «паттăрсен» юлашкийĕсем юнлă сăмсисене шăла-шăла тарни çинчен те шарламаççĕ.

Çавнашкалах нимĕç фашисчĕсем 1918 çулти ĕçсене те «маннă». Ун чухне вĕсем Украинăна ялесшĕн пулчĕç. Украинăри рабочисене, хресченсене валли пусмăр хатĕрлерĕç. Украина халăхне çаратма тытăнчĕç.

Совет Союзĕнчи халăхсем Германи захватчикĕсене хирĕç ун чухне те пĕтĕм вăйпа тухрĕç. Захватчиксен каллех намăслăн тармалла пулчĕ.

Украина халăхĕ, вырăс халăхĕ пулăшса пынипе, хăйĕн çĕршывĕнчен захватчиксене таçталлах кăларса ывăтрĕ.

Çак кунсем ĕнтĕ каялла иртсех пыраççĕ. Эпир çĕнĕ саманара пурăнатпăр Пирĕн çĕршыв — социализм çĕршывĕ Совет халăхĕ яланах миршĕн, мирĕн сталинла политикишĕн тăчĕ. Анчах та империализм вăрçăсăр пурăнаймасть. Германи фашисчĕсем, — урса, иртнĕсе кайнине пула, — 1939 çулта империализмлă иккĕмĕш вăрçа пуçласа ячĕç. Ăна вĕсем сарсах, тарăнлатсах пычĕç,—çапла вара нумай çĕршывсенчи халăхсене вăрçа вучĕ ăшне кĕртсе ячĕç.

Июнĕн 22-мĕшĕнче, ирхине 4 сехетре, юнлă Гитлер, нимĕн çинчен те пĕлтермесĕр, Совет Союзне хирĕç хăйĕн войскисене ярса, вăрçа пуçларĕ.

СССР Правительстви çак вăрă-хурахла талăнăва сирсе пăрахма тата Германин войскисене пирĕн социализмлă çĕршыв территорийĕнчен хăваласа кăларма Хĕрлĕ Çара приказ панĕ.

Совет çарĕ, унăн нумай миллионлă халăхĕ хăйĕн тĕллевĕсене лайăх пĕлет. Çакă вăл отечественнăй вăрçă, тăван çĕршыва, социализмлă çĕршыва сыхлассишĕн пулса пыракан вăрçă. Елĕк чухне, 1812 çулта, Россия çине Наполеон хăйĕн войскисемпе килнĕ. Çав вăрçăра, отечественнăй пысăк вăрçăра, Наполеона пирĕн вырăс çарĕсем çапса аркатрĕç, пĕтерсе хучĕç. Нимĕн иккĕленмелли те çук, Хĕрлĕ Çар хăйĕн тăван халăхĕ кулленхи пулăшса пынипе, çав мăнкăмăлланса кайнă Гитлера та хаярăн çапса салатĕ, унăн войскисене лучăркаса, талтаса тăкĕ те ним юлмиччен пĕтерĕ.

«Совет Союзĕн Правительстви çакна çирĕппĕн шанса тăрать: пирĕн çĕршыври пĕтĕм халăх, мĕнпур рабочисем, хресченсем тата интеллигенци, арçынсемпе хĕрарăмсем хăйсен обязанноçĕсене, хăйсен ĕçне тивĕçлĕ ăнланулăхпа туса пырĕç. Пирĕн пĕтĕм халăх халĕ нихăçанхинчен те пĕтĕçӳллĕ тата пĕрлĕхлĕ пулмалла. Хĕрлĕ Çар, Флот тата авиаци ытти сене пурнăçа кĕртмешкĕн, тăшмана çĕнтермешкĕн пирĕнтен кашнинех хăйне тата ытти сене те чăн-чăн совет патриотне тивĕçлĕ пек дисциплинăллă, организацияллĕ пулма тата хăйĕн пурнăçне шеллемесĕр кĕрешме хушмалла.

Правительство сире, Совет Союзĕнчи граждансемпе гражданкăсене, пирĕн мухтавлă большевикла парти тавра, пирĕн Совет правительстви тавра, пирĕн аслă çулпуç Сталин юлташ тавра хамăр ретсене тата та тачăрах пĕтĕртерме чĕнет.

Пирĕн ĕç—тĕрĕс ĕç. Тăшмана çапса аркататпăр. Çĕнтерӳ пирĕнте пулĕ» (В. Молотов).

В. ДОЛГОВ.



Англи çыранĕнчи оборона.



Германи фашисчĕсем Франци халăхне выçтарса вĕлереççĕ. УКЕРЧЕК ÇИНЧЕ: Парижри продовольстви магазинĕ умĕнчи черет. («Лайф» журналран илнĕ репродукци).

Коммунистсем вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçре

КАЛИНИНО. ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ социализмлă ялхуçалăхĕ умне пысăк задачăсем кăларса тăратрĕ. Çав задачăсене пурнăçлас ĕçре ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата вылăхчĕрлĕх продуктивлăхне ӳстермĕшĕн Чăваш АСС Республикинчи колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен» йышăннă постановлени колхозсемпе колхозниксене тырпул тухăçне тата вылăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстерме пысăк майсем туса панă.

Мăн Явăшри Ленин ячĕпе тăракан колхозри парти кандидачĕсен группи вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе чылай ĕçсем турĕ. Коммунистсен колхоз производствинчи авангардлă ролĕ ӳсрĕ. Колхоз 1937 çултанпа çулсеренех вăтам шутпа гектартан 23—25 центнер урпа, 100-шер пăтран кая мар ытти культурăсем туса илнĕ. Колхоз 1939 çултанпа Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ.

Кăçалхи çул коммунистсем вăтам шутпа кашни гектартан 20 центнер тĕштырă туса илес задача лартнă. Вĕсем çак задачăна пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе колхозниксен массинĕ мобилизациленĕ. Колхоз çуракине ăнăçлăн вĕçлерĕ. Çураки вăхăтĕнче коммунистсем уйхирте пример кăтартса ĕçлерĕç, вĕсем хăйсен нормисене икшер-виçшер хут иртерсе тултарса пычĕç.

Хальхи вăхăтра колхозăн уйхирĕсенче кĕрхипе çурхи тырă калчисем хăмăш пек пĕр тикĕс çитĕнеççĕ. Калчасем колхозниксемпе колхозницăсене савăнтараççĕ.

Колхоз тата кандидатсен группи çураки ĕçне вĕçленĕ хыççăнах, ытти ĕççисене хĕрӳллĕн тытăннă. Çĕртме сухине суханаса пĕтерĕ, пурĕ 324 гектар çĕртме сухи тунă. Çĕртме сухи участокĕ çине 4.500 лав тислĕк тăкнă.

Коммунистсем уйри тырпула тăхăçăр пуçтарса кĕме хатĕрленес ĕçе колхозниксемпе колхозницăсене сарлакан явăçтарнă. Халĕ колхозра уборка вăхăтĕнче кирлĕ ялхуçалăх машинисене юсас, ытти инвентарьсене хатĕрлес ĕçсем хĕрӳллĕн пулса пыраççĕ.

Кăçал Ленин ячĕпе тăракан колхоз пур ĕççемпе те районра малти рете тухрĕ. Колхозри коммунистсем вăйлă тырпул туса илес ĕçĕн организаторĕсем. Вĕсем мĕнпур ĕçе пĕр-пĕринпе çыхăнтарса, вăхăтра пысăк пахалăхпа туса пыраççĕ.

Ф. ЕГОРОВ.

Осоавиахимовецсен тактикăллă вĕренĕвĕ

ШАМАРША. Çак кунсенче Шămăршă подрайонĕнчи Осоавиахим членĕсен тактикăллă вĕренĕвĕ пулса иртрĕ. Унта осоавиахимовецсен вĕренӳ подразделенийĕсем пулчĕç.

Тактикăллă вĕренӳ аван иртрĕ. Осоавиахим членĕсем хăллехи вăхăтра группăсенче тата командăсенче вĕренсе илнине уйра—тактикăллă вĕренӳре тĕрĕслесе пăхрĕç, вĕсем тăван çĕршывшăн çапăçăва тухма хатĕр тăнине кăтартса панă.

М. АЛЕКСЕЕВ.

Ответлă редактор
В. Я. ЯКОВЛЕВ.

КАЗАНСКИЙ
ФИНАНСОВО-ЭКОНОМИЧЕСКИЙ ИНСТИТУТ
ИМЕНИ КУЙБЫШЕВА
ОБЪЯВЛЯЕТ ПРИЕМ СТУДЕНТОВ НА 1941—42 УЧЕБНЫЙ ГОД.

Институт готовит высококвалифицированных экономистов-финансистов для работы в финансовых органах и спецбанках (Промбанк, Комбанк, Торгбанк и Сельхозбанк).

Все поступающие подвергаются приемным экзаменам по математике, географии, истории народов СССР, русскому языку и литературе.

Отличники зачисляются без экзаменов.

Прием заявлений производится с 20 июня по 31 июля.

Приемные экзамены с 1 по 20 августа.

Студенты обеспечиваются общежитиями.

При институте имеются столовая, радиоузел и звуковое кино.

На государственную стипендию зачисляются отличники средней школы и лица, выдержавшие 3 приемных экзамена на „отлично" и один—на „хорошо."

С заявлениями и справками обращайтесь по адресу: Казань, ул. Карла Маркса, д. № 43, тел. № 1—95.

Подробный справочник высылается по первому требованию.

3—3 ДИРЕКЦИЯ.

Вурнарский зооветтехникум
об'является прием учащихся на 1941—42 учебный год.

Техникум готовит: 1) зоотехников средней квалификации и 2) помощников ветеринарных врачей.

В техникум принимаются граждане СССР в возрасте от 15 до 35 лет.

Все поступающие подвергаются приемным испытаниям в об'еме неполной средней школы по математике, русскому языку, физике, Конституции СССР и чувашскому языку.

Окончившие НСШ или 7 классов средней школы с аттестатом отличника принимаются в техникум без приемных испытаний и зачисляются на стипендию.

Заявления подаются на имя директора, приложить следующие документы в подлинниках: 1) о рождении, 2) об образовании, 3) о состоянии здоровья и прививке оспы, 4) две фотокарточки, заверенные госучреждением с собственноручной подписью, 5) справка об отношении к воинской обязанности (для военнообязанных), 6) почтовые марки на 60 коп.

Прием заявлений производится с 1 июня по 18 августа, приемные испытания производятся с 19 по 28 августа. Начало занятий с 1 сентября.

Учащиеся обеспечиваются общежитием и постельными принадлежностями. При техникуме имеется столовая.

Техникум имеет хорошо оборудованные кабинеты, учебное хозяйство и т. д.

Плата за обучение и стипендия устанавливаются на общих основаниях.

АДРЕС: пос. Вурнары, Чувашской АССР, Зооветтехникум.

3—2 ДИРЕКЦИЯ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, «Ĕçхĕрарăмĕ» журналăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 2525. Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ №1260. Ф. б. 58 84 п. л.